Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

КПСС Чăваш обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн тата Министрсен Совечĕн органĕ

Орган Чувашского обкома КПСС, Верховного Совета и Совета Министров Чувашской АССР

№ 22 (20155) • Эрнекун, 1990 çулхи январĕн 26-мĕшĕ • Хаçат 1918 çулхи февральтенпе тухать • Хакĕ 3 пус

• *Ĕç коллективĕсенче*

Тупăш пысăкланать

Пĕлтĕр «Чувашмебель» пĕрлешÿ предприятийĕсем пĕрремĕш хут çĕнĕлле — аренда йĕркипе ĕçленĕ. Çавăнпа производствăпа экономика кăтартăвĕсем мĕнле пуласси пурне те интереслентернĕ.

— Татăклă итогсем хатĕр мар-ха, вĕсене пĕтĕмлететпĕр, çывăх кунсенчех ассоциаци правленийĕн анлă ларăвĕнче сÿтсе яватпăр. Анчах, малтанлăха шутласан та, аренда пысăк усă панине аван куртăмăр, — каласа парать аренда предприятийĕсен «Чувашмебель» ассоциаци генеральнăй директорĕн экономика енĕпе ĕçлекен заместителĕ Л. Погодина.— Тĕп кăтарту — тупăш. Вăл планпа палăртниччен пĕр миллион та 469 пин тенкĕ нумайрах. Сĕтел-пукан фабрикисем пурте тупăшлă ĕçлеççĕ. Продукци ярса памалли договор обязательствисене пĕтĕмпех пурнăçланă.

Аренда йĕркипе ĕçлесе, кашни коллектив производствăна аталантармалли, социаллă пурнăç ыйтăвĕсене татса памалли тата ĕçшĕн пурлăхпа хавхалантармалли фондсене палăртниччен нумайрах укçа-тенкĕ хывнă. Çапла вара кăçал технологие çĕнетес, пахха оборудовани вырнаçтарса лартас, сĕтел-пукан ассортиментне анлăлатас енĕпе паллă утăм тăваççĕ. Продукци калăпăшне 11 процент ÿстерме йышăннă. Улатăрти, Канашри, Вăрмарти фабрикăсенче сĕтел-пукан туса кăларассине уйрăмах нумай ÿстерĕççĕ.

Аренда хутшăнăвĕсем ĕç коллективĕсен малашлăхне уççăн курса тăма май парать.

Татăклă улшăну

Февраль пуçламăшĕнче Шупашкарти приборсем тăвакан завод ĕçе кĕнĕренпе 25 çул çитет. Предприятие [illegible]

Суйлав умĕн

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕнче

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн черетлĕ ларăвĕ пулса иртнĕ. Унта Парачкав районĕнчи халăх депутачĕсен Советĕсем РСФСР, Чăваш АССР тата вырăнти Советсен халăх депутачĕсен суйлавне хатĕрленес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен ыйту пăхса тухнă. Ку ыйтупа халăх депутачĕсен Парачкав район Совечĕн ĕçтăвкомĕн председателĕ Н. И. Блашенков тухса каланă.

Районта суйлав кампанийĕ халăха анлăн пĕлтерсе тăнă тата демократилле лару-тăрура иртнине палăртнă. Законпа килĕшÿллĕн, Советсен мĕнпур сыпăкĕсем тăрăх депутат мандачĕсен хисепне палăртнă, районти, ялсенчи тата участоксенчи суйлав комиссийĕсене туса хунă, халăх депутатне суйлама кандидатсем тăратса регистрациленĕ. Хальхи вăхăтра кандидатсем хăйсен суйлавçисемпе тĕл пулма тытăннă. Суйлав кампанийĕ мĕнле пынине район хаçачĕ анлăн çутатать.

Çав вăхăтрах, ларура палăртнă тăрăх, районти Советсенчен хăшпĕрисем суйлава хатĕрленмелли мерăсене тата суйлав çинчен калакан çĕнĕ законсене кирлĕ пек пурнăçламаççĕ. Суйлав комиссийĕсене вĕсем ĕçе йĕркелемешкĕн çителĕксĕр пулăшаççĕ. Суйлав участокĕсенчен çурри телефон сыхăнăвĕпе усă курмасть. Хăшпĕр хуçалăхсен, учрежденисемпе предприятисен руководителĕсем суйлав комиссийĕн уйрăм членне суйлава хатĕрленесе иртсерне тапхăрта производство е служба тивĕçĕсене пурнăçлассинчен вăхăтра хăтарман. Сасăламалли пÿлĕмсем хатĕрлессине те вăраха янă. Вырăнти Советсен ĕç тăвакан комитечĕсем, суйлава хатĕрленес енĕпе ĕçленĕ май, çакна экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕнчи конкретлă результатсемпе, районти халăхăн пурлăхпа ăс-хакăл ыйтăвĕсене тивĕçтерессипе çыхăнтармаççĕ.

Президиум сÿтсе явнă ыйтупа йышăннă постановленире районти вырăнти Советсем суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче организациллĕ-техникăлла мероприятисене пурне те çĕнетÿ процесĕсемпе тата политика реформин хальхи тапхăрĕн задачисемпе килĕшÿллĕн пурнăçлама тивĕçлине палăртса хăварнă. Çавна май халăх депутачĕсен суйлавне хатĕрленес тĕлĕшпе ĕç коллективĕсенче, граждансем пурăнакан вырăнта, суйлав участокĕсенче ĕçлеме, çак ĕçе суйлав çинчен калакан çĕнĕ законсен демократилле требованийĕсемпе килĕшÿллĕн пурнăçлама кирли çине уйрăмах тимлĕ пăхнă.

Ларура Чăваш АССР халăх депутачĕсен вырăнти Советĕсен 1989 çулхи организациллĕ-массăллă ĕçĕн итогĕсене пĕтĕмлетнĕ. Çак ыйтупа йышăннă постановленире республикăри халăх депутачĕсен Советĕсем вырăнти пурнăç ыйтăвĕсене татса парас ĕçре хăйсен пĕлтерĕшне ÿстерме тивĕçлине кăтартса панă. Çак тĕллевпе сессисен, яланхи комиссисен, уйрăм депутатсен ĕçне лайăхлатмалла, ăна граждансен обществăпа политика пурнăçĕнчи активлăхне ÿстерес тĕллевпе йĕркелемелле.

Чăваш АССРĕн Чăваш АССРĕнчи чĕлхесем çинчен калакан законĕн проектне палăртса хатĕрлесси çинчен ыйту сÿтсе явнă. Президиум закон проектне хатĕрлес енĕпе ĕçлекен ушкăн йĕркеленĕ. Ларура çавăн пекех республика пурнăçĕн ытти хăшпĕр ыйтăвĕсене пăхса тухнă.

ĂШĂ КĂМĂЛЛĂ ТĔЛПУЛУСЕМ

142-мĕш Октябрьски наци-территори суйлав округĕ тăрăх РСФСР халăх депутатне суйлама Вăрмар районĕнчи «Путь Ильича» колхоз председательне И. М. Михайлова, СССР космонавт-летчикне А. Г. Николаева тата «Шупашкарти промышленность тракторĕсен завочĕ» производство пĕрлешĕвĕнчи Н. П. Федоров электромонтера кандидата тăратнă.

Январĕн 24-мĕшĕнче пирĕн республикăна хăйĕн суйлавçисемпе тĕл пулма СССР космонавт-летчикĕ, Ю. Гагарин ячĕпе хисепленекен Космонавтсем хатĕрленекен центр начальникĕн пĕрремĕш заместителĕ, икĕ хут Совет Союзĕн Геройĕ Андриян Григорьевич Николаев килсе çитрĕ.

Пĕрремĕш тĕлпулу — В. И. Ленинăн Тĕп музейĕн Шупашкарти [illegible]

активлă хутшăнасси, аслă ăрури çынсене, ача амăшĕсемпе ачасене социаллă пулăшу парассине малалла лайăхлатса пырасси, экологи ыйтăвĕсем. Росси Федерацийĕн унччenхи суйлаври Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулнă май, Андриян Григорьевич хăйĕн округĕнчи суйлавçăсен шанăçне мĕнле тÿрре кăларса пыни çинчен отчет туса пачĕ. Наказсене [illegible]

лĕ, — терĕ вăл. — Республикăра А. Николаева пурте лайăх пĕлеççĕ. Вăл хăйĕн тĕнче уçлăхĕнчи паттăрла вĕçевĕсемпе чăваш халăхĕн ятне тĕнче умĕнче чапа кăларчĕ. Пирĕн республикăра ăна темиçе хутчен те РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулма суйланă. Андриян Григорьевич депутат тивĕçне чыслăн пурнăçлать, суйлавçăсемпе тачă çыхăну тытать.

А. Г. Николаев — чăннипех халăх геройĕ. Вăл — ученăй, техника наукисен кандидачĕ. Космонавтсем хатĕрлекен центрта пысăк ĕç туса пынипе пĕрлех, пи-

Пухура А. Г. Николаев сăмах каларĕ. Хăйне кандидата тăратса пысăк чыс тунăшăн рабочисен коллективне чĕререн тав туса, вăл çакна палăртрĕ: округра депутата суйлама тăратнă тата икĕ кандидат — Вăрмар районĕнчи «Путь Ильича» колхоз председателĕ И. М. Михайлов тата «Шупашкарти промышленность тракторĕсен завочĕ» производство пĕрлешĕвĕнчи Н. П. Федоров электромонтер та — халăх шанăçне чăннипех тивĕçлĕ çынсем. Çавăн пек çынсене депутат пулма суйлани Советсен пĕлтерĕшне ÿстерĕ. Вĕсем чăннипех хăйсен ре-

Уççăн çырнă çырусем

Мĕнле ăнланмалла?

Тĕмшер ял Советне кĕрекен ялсенче пурăнакансем «50 лет Октября» совхоза государствăна сĕт сутмалли плана тултарас тĕлĕшпе çуллен пулăшаççĕ. 1989 çулта рабочисем килти хуçалăхран 351 тонна сĕт сутнă, çав шутра Варасăрта пурăнакансем — 216 тонна. Çак ĕçре З. Компанькова, Л. Ергачева пенсионерсемпе К. Мишуткина, М. Рожнова рабочисем ырă тĕслĕх кăтартаççĕ. И. Мишуткин рабочин вара пуринчен те пысăкрах кăтарту—çулталăкра вăл 6.000 килограма яхăн сĕт сутнă.

Ятла пурăнакансенчен нумайăшĕ харпăр хăй хуçалăхĕнче вăкăр самăртать, вĕсене те ял çыннисем совхоз планĕ шучĕпе государствăна параççĕ. В. Ергачев, М. Сотников, И. Мишуткин совхоза 400 килограмран кая мар таякан вăкăрсем панă.

Шел пулин те, тав тăвас вырăнне совхоз дирекцийĕ хуçалăха хăйсен ирĕкĕпе пулăшакансен нушисем çине çаврăнса та пăхмасть: сĕт сутакансене тырă та, утă тытакан апат та уйăрса памасть.

Эпĕ иртнĕ çулхи сентябрĕн 4-мĕшĕнче 320 килограмм таякан вăкăр патăм. Кашни килограмне 2 тенкĕ çурăпа йышăнмаллаччĕ. Мана вара 2 тенкĕ те 14 пус çеç тÿлерĕç. Мĕнле ăнланмалла çакна?

В. МИШУТКИН,
обществăлла корреспондент.

Куславкка районĕ.

Шыв пур çинчех шывсăр

«Гвардеец» колхоз Вăрнар районĕнчи чи пысăккисенчен пĕри. Пĕр Мăн Çавал шывĕ кăна колхоз çĕрĕ урлă 10 çухрăм ытла тăсăлать, унсăр пуçне, колхоз çĕрĕ урлă Упаçырмипе Сурăм шывĕ юхаççĕ. Тĕрĕссипе, пирĕн пек шывран пуян колхоз е совхоз çук та пулĕ. Кушар Юнтапа ялĕнчи шыв башнинчен 30 метрта пуçламăш шкул, çул урлă автотрактор паркĕ, механизаторсен çурчĕ, столовăй, клуб, медпункт, почта, йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен çурт вырнаçнă. Анчах та çак çуртсем, вăл шутра гараж та, шывсăр тертленеççĕ. Гаражпа столовăйне автоцистернăпа шыв турттараççĕ, учреждени техничкисем ăç[illegible] [illegible] шыв патаççĕ. Столовăй умĕнчи [illegible] çăл пурччĕ, кăçал вăл та çĕршĕнсе пĕтрĕ, [illegible] çынсем, ăна вылькăх [illegible] хĕраса, [illegible]. Колонкăç муклашкисемпе питĕрсе лартрĕç. Колонкăсем ĕçлемеççĕ.

Пĕлтĕр, çураки вĕçленсен, шыв уçламалли насуса улăштарма тăчĕç. Пăрăхсене колхозăн фермăсене механизацилес енĕпе ĕçлекен инженерĕ В. Шумилов тем вăхăтра никамран ыйтмасăр хăй пурăнакан Уйкас Юнтапа ялне [illegible] Çав вăхăтранпа ялти колон-

ăсса канава юхтарать. Витесенчен 250—300 метртан юхса иртекен Мăн Çавал çав тислĕк шывне йышăнать те анаталла илсе каять. 100 метртах пысăк тислĕк купи выртать. Иккĕмĕш çул кунтан пĕр лав уя илсе кайман, çав вăхăтрах минераллă удобренисене ниçта чиксе пĕтерме çук, кÿреççĕ те кÿреççĕ.

М. ПИМЕНОВ,
районти халăх контроль комитечĕн штатра тăман инспекторĕ, вăрçăпа ĕç ветеранĕ.

Çавăнпах ялта юлмаççĕ

Çакна чĕре ыратнăран çыратăп. Ялти çын вăл çын та мар, этем те мар. Яла юлакан çын вăл — ним шутлама пĕлмен чĕрĕ ĕмĕлке çеç.

Колхоз уйĕнче çуллахи вăхăтра ир пуçласа каçчен ĕçлетпĕр. Тыррине, улăмне, уттине хамăр алăпа туса паратпăр. Етĕрне районĕнчи «Ленинская искра» колхозра вара ĕçлекен халăхран ытла та мăшкăлласа кулма пуçларĕç. Ĕçленĕшĕн укçан çеç тÿлеççĕ. Улăмне те тислĕкшĕн çеç параççĕ. Тислĕке хамăрăн тиемелле, лашапа леçме лашисем çук. Трактористсене пуç çапатпăр. Килти тислĕке колхоза тракторпа кăларса панăшăн колхоз сехетне 2 тенкĕ те 95 пус тытать. Пĕр прицеп — 4 тонна тиесе леçме сахалтан та 5 сехет каять. Колхоза 4 тонна тислĕк парас тесен, сахалтан та 15 тенкĕ тÿлемелле.

Хуçалăха халĕ пирĕн пĕтĕмпех Шупашкарти аслă пĕлÿ илнĕ специалистсем ертсе пыраççĕ, мĕне вĕрентеççĕ-ши вĕсене унта?

Ялта пурăнакан рядовой колхозникăн кашни утăмрах çакăн пеккине тÿссе пурăнмалла. Çавăнпа ялта халăх юлмасть.

Л. МУРЗЕЕВ.

Етĕрне районĕ,
Анат Ачак ялĕ.

Суя пурнăç—вăхăтлăх

Çулталăк вĕçĕнче «Коммунизм ялавĕ» хаçатра Хĕрлĕ Чутай районĕнчи пĕр хуçалăхра кукурузăна хĕл кунĕсемччĕнех пухса кĕртмен çинчен çырнăччĕ. Мĕнле ăнланмалла «çивĕч сигнал» тенине? Хĕл варринче тин, юр айне пулнă кукурузăна вырса илсен те, унран усси çук. Кая юлса систерни вăл совхоза ертсе пыракансене, суя отчетсем парса ларакансене ответ тытармалли сигнал кăна пулса тăчĕ ĕнтĕ.

Вăтăр çул каяллапа пулса иртнĕ ĕç çинчен калам. Етĕрне районĕнчи Мăн Чурачă ялĕнче [illegible] пурăнна эпĕ ун чух, ревком комиссийĕн председателĕччĕ. Хиртен тырă пуçтарса кайнă хыççăн колхозниксенчен комиссие хыпар килчĕ: икĕ келетри тырра çĕнĕрен виççе тăрăслăр. [illegible] 200 центнер ытлашши [illegible] тырă тухрĕ. Колхоз председателĕ В. И. Сергеев, ытлашши тырра кăтартас мар тесе, ревкомисси председательне Платонова пĕрлехи пуçтарса [illegible] хура суя отчет тума хушрĕ. Эпĕ вара, тÿсеймесĕр, [illegible] ытлашши тырă пулсăр, хăш амбарта мĕн чухлĕ ытлашши тырă пулнине пухури халăх пĕлтерсе [illegible]

Çапла вара кăçал технологие çĕнетес, пахă оборудовани вырнаçтарса лартас, сĕтел-пукан ассортиментне анлăлатас енĕпе пысăк утăм тăваççĕ. Продукци кăларăшне 11 процент ÿстерме йышăннă. Улатăрти, Канашри, Вăрмарти фабрикăсенче сĕтел-пукан туса кăларассине уйрăмах нумай ÿстерĕççĕ.

Аренда хутшăнăвĕсем ĕç коллективĕсен малашлăхне [illegible]

Татăклă улшăну

Февраль пуçламăшĕнче Шупашкарти приборсем тăвакан завод ĕçе кĕнĕренпе 20 çул çитет. Предприятире юбилее çĕнетĕве тарăнлатас, продукци кăларăшне ÿстерес енĕпе татăклă улшăну тунипе паллă кĕртме йышăннă.

Юбилей комиссийĕн председателĕ, завод директорĕ Г. Ильченко çапла каласа парать:

— Хальхи вăхăтра производствăпа экономика кăтартăвĕсене лайăхлатасси халăха кирлĕ таварсем нумайрах туса кăларнипе тачă çыхăннă. Усĕм çук мар. Пилĕкçуллăх вĕçленнĕ тĕле план тăрăх çулталăкра 8 миллион та 600 пин тенкĕлĕх тавар туса кăлармаллаччĕ, чăннипе çак шайран 1989 çултах иртнĕ. Пĕлтĕр халăха кирлĕ таварсем 10 миллион тенкĕлĕх хатĕрленĕ. Кăçалхи тĕллев — 19 миллион тенкĕ шайне çитесси. Коллектив ĕç укçи фончĕн кашни тенки пуçне пĕр тенкĕлĕх тавар туса кăларма палăртрĕ.

Уйрăммăн илсен, кăçал суту-илÿ организацийĕсене 35 пин «Азамат» магнитола, 85 пин «Хĕвел» электротепловентилятор ăсатмалла. Халăха кирлĕ таварсем туса кăларнипе илнĕ тăса тупăшăн 70 процентне цехсене уйăрса параççĕ.

А. АСЛУТ.

АША КАМАЛЛА ТЕЛПУЛУСЕМ

142-мĕш Октябрьски наци-территори суйлав округĕ тăрăх РСФСР халăх депутатне суйлама Вăрмар районĕнчи «Путь Ильича» колхоз председательне И. М. Михайлова, СССР космонавт-летчикне А. Г. Николаева тата «Шупашкарти промышленность тракторĕсен завочĕ» производство пĕрлешĕвĕнчи Н. П. Федоров электромонтера кандидата тăратнă.

Январĕн 24-мĕшĕнче пирĕн республикăна хăйĕн суйлавçисемпе тĕл пулма СССР космонавт-летчикĕ, Ю. Гагарин ячĕпе хисепленекен Космонавтсем хатĕрлекен центр начальникĕн пĕррремĕш заместителĕ, икĕ хут Совет Союзĕн Геройĕ Андриян Григорьевич Николаев килсе çитрĕ.

Пĕрремĕш тĕлпулу — В. И. Ленинăн Тĕп музейĕн Шупашкарти филиаленче. Ку ăнсăртран мар: ытти ĕç коллективĕсемпе пĕрлех, РСФСР халăх депутатне суйлама мухтавла ентешĕмĕр кандидатурине республикăри вăрçăпа ĕç ветеранĕсен организацийĕн совечĕн пленумĕ те сĕннĕ. Музей совечĕн членĕсемсĕр пуçне, залра — хулари парти, комсомол, вăрçă тата ĕç ветеранĕсем.

Тĕлпулăва Чăваш АССРĕнчи вăрçăпа ĕç ветеранĕсен организацийĕн совечĕн президиумĕн председателĕ В. Е. Кузнецов уçрĕ.

Пухура депутата суйлама тăратнă кандидат довереннăйĕ А. И. Иванов, музей совечĕн членĕсем В. П. Чернов, П. П. Петров, Л. С. Короткова, П. Н. Теплов, Т. С. Сергеев, А. В. Турханов, Калинин районĕнчи вăрçăпа ĕç ветеранĕсен совечĕн председателĕ В. И. Андрейченко, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ художникĕ Э. М. Юрьев тухса каларĕç. Вĕсем А. Г. Николаев РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕн тивĕçне тÿрĕ кăмăлпа пурнăçласса пынине палăртрĕç.

А. Г. Николаев пухăннисене хăйĕн суйлав умĕнхи платформипе паллаштарчĕ. Тĕп вырăнта — тĕнче уçлăхĕпе мирлĕ тĕллевсемпе кăна усă курасси, çамрăксене патриотла воспитани пама активлă хутшăнасси, аслă ăрури çыннисене, ача амăшĕсемпе ачасене социалла пулăшу парассине малалла лайăхлатса пырасси, экологи ыйтăвĕсем. Россия Федерацийĕн унчченхи суйлаври Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулнă май, Андриян Григорьевич хăйĕн округĕнчи суйлавçăсен шанăçне мĕнле тÿрре кăларса пыни çинчен отчет туса пачĕ. Наказсене пурне те пурнăçа кĕртнĕ. Çырусем, жалобăсем çулталăк тăршшĕпех нумай пырса тăраççĕ. Вĕсенче хускатнă ыйтусене пĕрне те шута илмесĕр хăварман. Тивĕçлĕ организацисене хутшăнтарса, ыйтусен 70 процентне вĕсен авторĕсем майлă татса пама май килнĕ.

Пуху А. Г. Николаев депутат тивĕçне мĕнле пурнăçласа пынине ырларĕ, çĕнĕрен депутата суйлама тăратнă кандидата панă наказсене çирĕплетрĕ.

Пирĕн республика столицин хисеплĕ гражданинĕ пулнă май, А. Г. Николаев В. И. Ленинăн Тĕп музейĕн Шупашкарти филиалне çулпуç портретне тĕртсе тунă кавир парнелерĕ.

А. Г. Николаевпа пĕрле КПСС обкомĕн секретарĕ Д. Ф. Семенов пулчĕ.

• • •

● Кăнтăрла иртсен А. Г. Николаев «Чувашкабель» производство пĕрлешĕвĕнчи рабочисемпе, инженерсемпе тата техниксемпе, служащисемпе тĕл пулчĕ.

Пухăва уçса, ĕç коллективĕн совечĕн председателĕ А. А. Волков кандидат довереннăйне А. И. Иванова сăмах парать.

— Андриян Григорьевич Николаевăн пурнăç çулĕ пирки калама кирлĕ те мар пулĕ, — терĕ вăл. — Республикăра А. Николаева пурте лайăх пĕлеççĕ. Вăл хăйĕн тĕнче уçлăхĕнчи паттăрла вĕçевĕсемпе чăваш халăхĕн ятне тĕнче умĕнче чапа кăларчĕ. Пирĕн республикăра ăна темиçе хутчен те РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулма суйланă. Андриян Григорьевич депутат тивĕçне чыслăн пурнăçлать, суйлавçăсемпе тачă çыхăну тытать.

А. Г. Николаев — чăннипех халăх геройĕ. Вăл — ученăй, техника наукисен кандидачĕ. Космонавтсем хатĕрлекен центрта пысăк ĕç туса пынипе пĕрлех, пирĕн республикăри ĕççыннисемпе тачă çыхăнать, нумай-нумай ыйтупа пулăшу парать.

Техника контролĕн пайĕн начальникĕ С. Фартышев, пухура сăмах каласа, кандидата çакăн пек наказ пачĕ: пĕрлешÿ филиалĕн — Сĕнтĕрвăрринчи кабель завочĕн иккĕмĕш черетне туса лартмашкăн централизациленĕ майпа укçа-тенкĕ уйăрас ыйтăва татса пама пулăшмалла. Ю. Тимков волочильщик хăйĕн сăмахĕнче çакна палăртрĕ: час-часах тивĕçлĕ металл вăхăтра ярса паман пирки хаклăраххисемпе усă курма тивет. Çавăнпа снабжени ĕçне татăклăн лайăхлатмалла. Кĕмĕл хакне ÿстерне май, кабель тăвакансем пысăк тăкак тÿсеççĕ. Ку енĕпе те коллектива пулăшни кирлĕ.

Суйлавçăсем хулара алатçимĕç, куллен кирлĕ таварсем сутассине лайăхрах йĕркелес ыйтăва çивĕччĕн хускатрĕç. «Чувашкабель» заводран Шупашкарăн кăнтăрхĕвеланăç тата кăнтăр енчи çĕнĕ районĕсене çÿрекен автобус маршрутĕсем уçмалла. РСФСР Верховнăй Совечĕн çамрăксемпе ĕçлекен комиссийĕн членĕ пулнă май, А. Г. Николаева çитĕнекен ăрăва çарпа патриотизм воспитанийĕ парас тĕлĕшпе ытларах тăрăшма сĕнчĕç.

Пухура А. Г. Николаев сăмах каларĕ. Хăйне кандидата тăратса пысăк чыс тунăшăн рабочисен коллективне чĕререн тав туса, вăл çакна палăртрĕ: округра депутата суйлама тăратнă тата икĕ кандидат — Вармар районĕнчи «Путь Ильича» колхоз председателĕ И. М. Михайлов тата «Шупашкарти промышленность тракторĕсен завочĕ» производство пĕрлешĕвĕнчи Н. П. Федоров электромонтер та — халăх шанăçне чăннипех тивĕçлĕ çынсем. Çавăн пек çынсене депутат пулма суйлани Советсен пĕлтерĕшне ÿстерĕ. Вĕсем чăннипех хăйсен регионĕсенче чăн-чăн хуçа пулса тăрĕç.

— Манăн позици, — терĕ вăл, — çакăн пек: космоса алла илме, хĕçпăшал хатĕрлеме каякан тăкаксене татăклăн чакарма сĕнкипе килĕшместĕп. Пурте тивĕçлĕ шайра пулмалла. Пирĕн çĕршыв хăйне ялан ах шанчăклăн хÿтĕлеме пултартăр.

А. Г. Николаев РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕн ĕçĕсене мĕнле туса пыни çинчен каласа пачĕ.

РСФСР халăх депутатне суйлама тăратнă кандидат суйлавçăсен нумай ыйтăвĕ çине ответлерĕ. Пухура унпа пĕрле КПСС обкомĕн идеологи пайĕн заведующийĕ Н. В. Пыркин, халăх депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн ĕçтăвкомĕн председателĕ С. В. Шалимов пулчĕç.

Çав кунах А. Г. Николаев «Шупашкарти промышленность тракторĕсен завочĕ» производство пĕрлешĕвĕнче ĕçлекенсемпе тĕл пулнă.

В. СТЕПАНОВ,
А. НИКОЛАЕВ.

Ÿкерчĕксем çинче: **хаклă парнене музей совечĕн председателĕ Л. Х. Михайлов йышăнать; «Чувашкабель» пĕрлешÿре.**

С. Игнатьевпа
Ю. Дмитриев
фотоÿкерчĕкĕсем.

«Гвардеец» колхоз Вăрмар районĕнчи чи пысăккисенчен пĕри. Пĕр Мăн Çавал шывĕ кăна колхоз çĕрĕ урлă 10 çухрăм ытла тăсăлать, унсăр пуçне, колхоз çĕрĕ урлă Упаçырмипе Сурăм шывĕ юхаççĕ. Тĕрĕссипе, пирĕн пек шывран пуян колхоз е совхоз çук та пулĕ. Кушар Юнтапа ялĕнчи шыв башнинчен 30 метрта пуçламăш шкул, çул урлă автотрактор паркĕ, механизаторсен çуртĕ, столовăй, клуб, медпункт, почта, йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен çурт вырнаçнă. Анчах та çак çуртсем, вăл шутра гараж та, шывсăр тертленеççĕ. Гаражпа столовăйне автоцистернăпа шыв турттараççĕ, учреждени [illegible] ĕçтан килнĕ унтан шыв йăтаççĕ. Столовăй умĕнчех çăл пурччĕ, кăçал вăл та çĕршĕнсе пĕтрĕ, çынсем, ăна выльăх аяса каясран хăраса, йывăç муклашкисемпе питĕрсе лартрĕç. Колонкăсем ĕçлемеççĕ.

Пĕлтĕр, çураки вĕçленсен, шыв уçламалли насуса улăштарма тăчĕç. Пăрăхсене колхозăн фермăсене механизацилес енĕпе ĕçлекен инженерĕ В. Шумилов тем вăхăтра никамран ыйтмасăр хăй пурăнакан Уйкас Юнтапа ялне «вĕрласа каять». Çав вăхăтранпа ялти колонкăсем шывсăр тутăхса лараççĕ. Ыйтса пăхрăмăр, Шумилов кулать кăна, сирĕн ялта пурпĕрех шыв пулмасть, тет.

Çав вăхăтрах хăй Кушар Юнтапари фермăна çитсе те курмасть, кунти ĕçсене мĕнле механизациленипе интересленмест.

Кунта сăвакан ĕнесем 3 витере тăраççĕ, 200 пуçа яхăн. Витесенчен пуçтарăнакан тислĕк шывне миçе çул ĕнтĕ пĕр çын витрепе

Суя пурнăç — вăхăтлăх

Çулталăк вĕçĕнче «Коммунизм ялавĕ» хаçатра Хĕрлĕ Чутай районĕнчи пĕр хуçалăхри кукурузăна хăл кунĕсемччĕнех пухса кĕртни çинчен çырнăччĕ. Мĕнле ăнланмалла «çиеçи сигнала» тенине! Хăл варринче тин, юр айне пулнă кукурузăна вырса илсен те, унрăн усси çук. Кая юлса систерни вăл совхоза ĕртсе пыракансене, суя отчетсем парса ларакансене ответ тытармалли сигнал кăна пулса тăнă ĕнтĕ.

Вăтăр çул [illegible] ĕç [illegible] ламха. Етĕрне районĕнчи Мăн Чураш ялĕнче пурăннă эпĕ ун чух, ревизи комиссийĕн председателĕччĕ. Хиртен тырă пуçтарса хывнă хыççăн колхозниксенчен комисси хыпар килчĕ: кĕлетри тырра çĕнĕрен виçса тĕрĕслĕр. Икĕ эрне хушши ĕçлерĕмĕр. 200 центнер ытлашши тырă тухрĕ. Колхоз председателĕ В. И. Сергеев, ытлашши тырра кăтартас мар тесе, ревкомисси председательне Платонова пĕрлехи пухура суя отчет тума хушрĕ. Эпĕ вара, тÿсеймесĕр, хăш ампарта мĕн чухлĕ ытлашши тырă пулнине вуласа парсан, пухури халăх пăлханса кайрĕ, çак 200 центнер тырра шута илтерчĕç.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Сура» совхоз пуçлăхĕсене çакна каласшăн: чăнлăх, тĕрĕслĕх пулмалла, вĕсене çухатсан, çын пуш-пушă чунлă юлать. «Суя пурнăç — вăхăтлăх, чăнлăх — ĕмĕрлĕх», тенĕ ваттисем.

А. ПАВЛОВА,
пенсионерка.

ÇĔНĔ ОБЪЕКТСЕНЧЕ

Шупашкар ГЭСĕн шыв хранилищине проектпа палăртнă шая çити тума чарăннă май, гидростроительсен уйрăм подразделенийĕсем ĕçсĕр тăрса юлас хăрушлăх пурччĕ. Çавăнпа халăх хуçалăхĕн ытти отраслĕсенче урăх регионсенче подряд ĕçĕ шырама, договорсем тума тивнĕ. «Чебоксаргэсстрой» строительство управленийĕн план . пайĕн начальникĕ М. Смоляренко çапла каласа парать:

— Чăваш республикинче çирĕм çула яхăн ĕçлесе, коллектив пысăк опыт пухрĕ. ГЭС объекчĕсемсĕр пуçне, пирĕн подразделенисем теплоэлектроцентральсем, пурăнмалли çуртсем, шкулсемпе ача-пăча учрежденийĕсем нумай туса лартрĕç. Республикăри ялхуçалăхне аталантарма та пулăшман мар.

1990 çул планне йĕркелеме çăмăл пулмарĕ. Çапах та кашни коллектива çителĕклĕ таран ĕç калăпăшĕ тупса панă. Сăмахран, Тутар республикинчи Елабугара ĕçлеме ятарласа . строительствăпа монтаж управленийĕ туса хунă. Вăл автозаводăн тимĕрçĕ цехне тума тытăнчĕ. Кăçалах 4,3 миллион тенкĕлĕх ĕçлемелле. Бригадăсем вахта меслечĕпе ылмашăнаççĕ.

Куславкка районĕнче ĕç калăпăшĕ ÿсрĕ. Сăмахран, кăçал «Карамышевский» совхозра 10 сурт, «Родина» совхозра — 20 сурт, шыв тасатакан сооружени тăватпăр. Пирĕн строительсен Çÿлти Выççăлккăра котельнăй, Малти Чăрăшкассинче — пуçламăш шкулпа ача сачĕн çуртне лартмалла.

Ятарласа йĕркеленĕ управленири бригадăсем Ямбург — Тула газ магистралĕ çинчи «Чебоксарская» компрессор станцийĕн иккĕмĕш черетне тăваççĕ. Унти хăватсене сывăх вăхăтрах ĕçе ямалла. Çавăн пекех станцире ĕçлекенсем валли поселок тăваççĕ.

Гидроузелăн тĕп сооруженийĕсене тунă çĕрте кăçал 6,1 миллион тенкĕлĕх ĕçлеме палăртнă. Атăл урлă автомобильсем çÿремелли кĕпере, сылтăм çыранти насус станцине малалла тăваççĕ. Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хушшинчи çырана бетон витнĕ дамбăпа çирĕплетеççĕ.

Н. АЛЕКСАНДРОВ.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

● ШУПАШКАР: ЫРА УЛШĂНУСЕМ. Икĕ суйлав хушшинче.

● КАМАН ПРАВИ ПЫСĂКРАХ? «Коммунизм ялавĕ» редакцийĕ Сĕнтĕрвăрри райсовечĕн ĕçтăвкомĕнче «çавра сĕтел» хушшинче иртнĕ калаçу.

— 2 стр.

● ХАМĂРА ЧĂВАШ ТЕНĔРЕН... Пирĕн публицист трибуни.

● УРАХ ÇĔРШЫВСЕНЧЕН килнĕ хыпарсем.

— 3 стр.

● КУЛЬТУРА ХЫПАРĔСЕМ.

● А. ПЕРМЯК ПОЭТ ÇЫРАВĔСЕМ.

— 4 стр.

Суйлав умӗн

Суйлав умӗн

ШУПАШКАР: ЫРӐ УЛШӐНУСЕМ

Республика столицинче пурӑнакансем 1990 ҫулхи мартӑн 4-мӗшӗнче РСФСР, Чӑваш АССР, хула тата район Совечӗсен халӑх депутачӗсене суйлаҫҫӗ. Ҫакӗ суйлав хушшинче иртнӗ тапхӑрта обществӑлла производство тата унӑн эффективлӑхӗ ӳснӗ. Экономикӑра социаллӑ пурнӑҫ ыйтӑвӗсем ҫине тимлӗрех пӑхма пуҫланӑ, производствӑпа ҫыхӑнман сферӑна хӑвӑртрах аталантарас, унӑн пурлӑх никӗсне ҫирӗплетес тӗлӗшпе мерӑсем йышӑннӑ.

Социаллӑ аталану

Халӑх йышӗ

ШУПАШКАР хула Совечӗ 114,3 тӑваткал километр лаптӑк территори е Чӑваш АССР территорийӗн 0,6 процентне йышӑнать. Унӑн составӗнче хулари виҫӗ район, хула йышши икӗ поселок тата пӗр ял Совечӗ.

Халӑх йышӗ 1989 ҫулхи переписӗн малтанхи даннӑйӗсем тӑрӑх 432,9 пин ҫын пулнӑ, ҫав шутра Шупашкарта кӑна 419.7 пин ҫын пурӑнать.

1979 ҫулхи перепиҫ хыҫҫӑн иртнӗ вунӑ ҫул хушшинче халӑх йышӗ 112,8 пин ҫын чухлӗ е 35.2 процент ӳснӗ. Юлашки ҫулсенче столицӑра кашни 1000 ҫын пуҫне ҫуралакансен йышӗ палӑрмаллах ӳснӗ, 18.8 ҫынна ҫитнӗ, вилекенсен шучӗ кашни 1000 ҫын пуҫне 5,1 ҫын чухлӗ чакнӑ.

Халӑха кирлӗ таварсем туса кӑларасси, тӳлевлӗ пулӑшу ӗҫӗсем туса парасси тата ваккӑн сутмалли тавар-ҫаврӑнӑшӗ

ХАЛӐХА таварсем кирлӗ чухлӗ парса тӑрасси тата пулӑшу ӗҫӗсем ытларах туса парасси — экономика аталанӑвӗнчи тӗп ҫул-йӗрсенчен пӗри.

Халӑха кирлӗ таварсем туса кӑларасси (эрех-сӑра хакӗсӗр пуҫне) 1986—1989 ҫулсенче 33.8 процент ӳснӗ, 987.3 миллион тенкӗ ҫитнӗ. 1989 ҫулта халӑха кирлӗ таварсем планран иртерсе 36,3 миллион тенкӗлӗх туса кӑларнӑ, ҫав шутра — пир-авӑр — 110 пин тӑваткал метр, трикотаж изделийӗсем — 815 пин штук, кӗпе ҫумалли машинӑсем — 100 штук, «Азамат» магнитолӑсем — 2.6 пин штук, «Хӗвел» электровентиляторсем — 16 пин штук, сӗтел-пукан — 602 пин тенкӗлӗх.

1989 ҫулта хула промышленноҫӗнче 287 тӗрлӗ ҫӗнӗ йышши халӑха кирлӗ таварсем туса кӑларма пуҫланӑ, вӗсенчен 259 тӗрлӗ таварсене — ҫӑмӑл промышленноҫпа апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗн предприятийӗсене.

Анчах туса кӑларакан таварсен шучӗпе ассортиментӗ халӑхӑн ӳссе пыракан ыйтӑвӗсене тивӗҫтермест. Машиностроени комплексӗн предприятийӗсем вӗсене туса кӑларассине вӑраххӑн ӳстерсе пыраҫҫӗ, ансат изделисем ҫеҫ туса кӑлараҫҫӗ. Промышленноҫра, пӗтӗмӗшле илсен, ӗҫ укҫи фончӗн кашни тенки пуҫне халӑха кирлӗ таварсем туса кӑларасси 2 тенкӗ те 71 пуспа танлашать пулсан, «Шупашкарти промышленность тракторӗсен заводӗ» производство пӗрлешӗвӗнче — 9 пуспа, машинӑсем туса кӑларакан заводра — 45 пуспа, агрегат заводӗнче — 50 пуспа, электроаппарату-

сене татса пани кӗрет. Вӗсен пысӑкӑшӗ мар пайӗ физкультурӑпа спорт енӗпе тата клуб учрежденийӗсем халӑх ыйтӑвӗсене тивӗҫтернипе ҫыхӑннӑ.

Пурӑнмалли ҫурт-йӗр тата социаллӑ пурнӑҫпа культура объекчӗсем тӑвасси

ПИЛӖКҪУЛЛӐХРА социаллӑ сферӑн пурнӑҫ никӗсне аталантарас тӗллевпе иртнӗ пилӗкҫуллӑхсенче юлса пынине пӗтерес енӗпе мерӑсем йышӑннӑ. 1989 ҫулта, 1985 ҫулхипе танлаштарсан, пурӑнмалли ҫурт-йӗр тата социаллӑ пурнӑҫпа культура, йӑла объекчӗсем тумашкӑн государство укҫа-тенкӗ уйӑрасси 88 процент ӳснӗ.

Пилӗкҫуллӑхӑн тӑватӑ ҫулӗнче мӗнпур ҫӑлкуҫсенчен укҫа уйӑрнипе 1096.4 пин тӑваткал метр пурӑнмалли ҫурт-йӗр туса лартнӑ, ҫакӑ вӑл, вунпӗрмӗш пилӗкҫуллӑхӑн тӑватӑ ҫулӗнчипе танлаштарсан, 191,8 пин тӑваткал метр ытларах. Вӗсенчен государство уйӑрнӑ укҫа-тенкӗпе — 729.8 пин тӑваткал метр, предприятисемпе организацисен фончӗсен укҫи-тенкипе — 225.8 пин тӑваткал метр, кооперативсемпе обществӑ организацийӗсен укҫи-тенкипе — 11 пин тӑваткал метр, пурӑнмалли ҫурт-йӗр тӑвакан кооперативсен укҫи-тенкипе — 119.8 пин тӑваткал метр, халӑх укҫи-тенкипе 10 пин тӑваткал метр пурӑнмалли ҫурт-йӗр хута янӑ.

1986—1989 ҫулсенче хулара шкулсем — 14.6 пин вырӑнлӑх, шкул ҫулне ҫитмен ачасен учрежденийӗсем — 8.8 пин вырӑнлӑх туса лартнӑ, пӗр сменӑра 2,6 пин ҫынна йышӑнма пултаракан поликлиникӑсем ӗҫе кӗртнӗ.

Сывлӑха сыхласси, халӑха вӗрентес ӗҫ тата культура

БОЛЬНИЦӐСЕН тата амбулаторипе поликлиника учрежденийӗсен шучӗ ӳссе пырать. Юлашки ҫулсенче хулара республикӑн стоматологи тата ачасен поликлиникине, отраслӗсен пӗрлехи «Куҫ микрохирургийӗ» наука-техника комплексӗнче, приборсем тӑвакан заводӑн медсанчаҫне тата ытти объектсем хута янӑ. Ҫакӑ больницӑсенче койка-вырӑнсемпе тивӗҫтерессине 114,4 пин ҫынна ҫити ӳстерме май панӑ. 1988 ҫулта, сӑмахран, койка-вырӑнсемпе 10 пин ҫынна тивӗҫтернӗ.

Сывлӑх учрежденийӗсенче 13.7 пин ҫын, ҫав шутра 2.4 пин врач тата 5.3 пин вӑтам медперсонал ӗҫлет.

1989 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗ

лӗ е 15.1 процент ӳснӗ. Шкул ҫулне ҫитмен ачасен учрежденийӗсене 39 пин ытла ача ҫӳрет. Ачисене ача сачӗсемпе яслисене вырнаҫтарма ыйтса ҫырса панӑ заявленисене тивӗҫтермесӗр хӑварасси чакнӑҫемӗн чакса пырать. Сӑмахран, 1988 ҫулта, 1987 ҫулхипе танлаштарсан, 2.262 заявлени е 16.7 процент чакнӑ тата 11.235 заявлени пулнӑ.

1989/90 вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑ тӗле хулара 3 аслӑ вӗренӳ заведенийӗ, специальноҫпа вӑтам пӗлӳ паракан 12 вӗренӳ заведенийӗ тата Мускаври кооперации институчӗн Шупашкарти филиалӗ ӗҫленӗ. Аслӑ вӗренӳ заведенийӗсенче 18.9 пин студент вӗренет. Ҫакӑ вӑл 1985/86 вӗренӳ ҫулӗнчипе танлаштарсан, 1.1 пин студент е 6 процент нумайрах. Специальноҫпа вӑтам пӗлӳ паракан вӗренӳ заведенийӗсенче вӗренекенсен йышӗ, 1985—86 вӗренӳ ҫулӗнчипе танлаштарсан, 4.8 процент чухлӗ чакнӑ, 12,1 пин ҫын пулнӑ.

1986—1989 ҫулсенче хулари аслӑ вӗренӳ заведенийӗсемпе техникумсем 26 пин ытла специалист, профессипе техника пӗлӗвӗ паракан училищӗсем 20 пин ытла квалификациллӗ рабочисем вӗрентсе хатӗрленӗ.

1989 ҫул пуҫланнӑ тӗле хулара 35 клуб учрежденийӗ, 3 музей, 5 театр, кӗнеке фончӗ 3.5 миллион экземпляр кӗнекерен тӑракан 68 библиотека, ҫирӗплетнӗ вырӑнта тӳлевлӗ кино кӑтартакан 25 киноустановка ӗҫленӗ. Клуб учрежденийӗсенче кашни 1 000 ҫын пуҫне 22 вырӑн тивнӗ, урӑхла каласан, 1985 ҫулхинчен 3 вырӑн чухлӗ нумайрах пулнӑ. Куракансен тата лекци залӗсенче лармалли вырӑнсен шучӗ 10,2 пин пулнӑ, ҫакӑ вӑл, 1985 ҫулхипе танлаштарсан, 29 процент нумайрах.

Ырлӑх-пурлӑх производстви

Наука-техника прогресӗ

ХАЛЬХИ пилӗкҫуллӑхри виҫӗ ҫулпа тӑхӑр уйӑхра хула промышленноҫӗнче 2 пин ытла комплекслӑ механизациленӗ тата автоматла оборудованипе усӑ курма пуҫланӑ, 93 участока, цеха, производствӑна комплекслӑ механизациленӗ тата автоматизациленӗ, 120 ытла потокпа механизаци, ҫурмаавтомат тата автомат линийӗсем вырнаҫтарса лартнӑ, производствӑра 570 ытла прогрессивлӑ технологи процесӗпе усӑ курма пуҫланӑ.

1988 ҫулта кашни рационализаторла сӗнӳпе 3092 тенкӗ перекетленӗ, ҫакӑ 1985 ҫулхипе танлаштарсан, 29,3 процент ытларах, пӗр изобретенипе усӑ курса 64,8 пин тенкӗ, 1985 ҫулхинчен 25,8 процент ытларах перекетленӗ.

Промышленность

ПРОМЫШЛЕННОСТЬ — хула экономикин малта пыракан отраслӗ. Пӗтӗм республикипе илес пулсан, столицӑри промышленность производствин калӑпӑшӗ 61,7 процент йышӑнать. Ҫак пилӗкҫуллӑх ҫулӗсенче промышленноҫпа производство фончӗсем ҫулталӑкра вӑтамран 5,6 процент ӳснӗ.

Машиностроенипе металл ӑпаласем туса кӑларасси (промышленность продукцийӗн пӗтӗмӗшле калӑпӑшӗн 59,8 процентчӗ) тата ҫӑмӑл промышленноҫпа (25,3 процент) апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗ (9,6 процент) промышленноҫӑн тӗп отраслӗсем пулса тӑраҫҫӗ.

Пилӗкҫуллӑхӑн тӑватӑ ҫулӗнче производство калӑпӑшӗ 29,6 процент ӳснӗ, 1989 ҫул вӗҫленнӗ тӗле 2,6 миллиард тенкӗлӗх пулнӑ, ӗҫ тухӑҫлӑхӗ 30,5 процент ӳснӗ.

1987 ҫултан пуҫласа промышленность продукцийӗ туса кӑларасси ӗҫлекенсен йышне чакарнӑ май ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстернипе хӑвӑрт ӳссе пырать.

Промышленноҫра ӗҫе йӗркелемелли прогрессивлӑ формӑсемпе усӑ кураҫҫӗ. Сӑмахран, предприятисене хуҫалӑх расчечӗн иккӗмӗш моделӗ ҫине куҫараҫҫӗ, ҫавна май тупӑша нормӑсем тӑрӑх валеҫеҫҫӗ, кунсӑр пуҫне, тухӑҫсӑр предприятисене ӗҫ коллективӗсем арендӑна илеҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра тӑватӑ предприяти тупӑшсене норма тӑрӑх валеҫмелли формӑпа усӑ курать, икӗ предприяти аренда подрячӗпе ӗҫлет.

Предприятисене хуҫалӑха тытса пымалли ҫӗнӗ условисем ҫине куҫарни продукци ярса памалли дисциплинӑна лайӑхлатма пулӑшрӗ. 1989 ҫулта продукци калӑпӑшне, договорти обязательствӑсене шута илсе, 99,4 процент пурнӑҫланӑ (1988 ҫулта 99 процент, пулнӑ).

Капитальнӑй строительство

ХУЛАРА капитальнӑй строительство анлӑ сарӑлнӑ. Ҫак пилӗкҫуллӑхӑн тӑватӑ ҫулӗнче производство объекчӗсем тата производствӑпа ҫыхӑнман ытти объектсем пурӗ 998,4 миллион тенкӗлӗх ӗҫе кӗртнӗ, ҫакна валли государство 1115.5 миллион тенкӗ тӑкакланӑ. Пилӗкҫуллӑхӑн тӑватӑ ҫулӗнче планне — тӗп фондсене

тенкӗ уйӑрнӑ, строительство валли уйӑрнӑ пӗтӗм укҫа-тенкӗ калӑпӑшӗнче унӑн виҫи 36,0 процента ҫити ӳснӗ.

Производство объекчӗсем тума государство уйӑрнӑ укҫа-тенкӗпе ӗҫлекен предприятисене реконструкцилеме тата ҫӗнӗ техникӑпа пуянлатма усӑ курни ҫак укҫа-тенкӗ эффективлӑхне ӳстерме пулӑшать. 1989 ҫулта государство ҫак тӗллевсем валли 103,7 миллион тенкӗ уйӑрнӑ, производство объекчӗсем тума уйӑрнӑ пӗтӗм укҫа-тенкӗ шутӗнче вӑл 50 процент пулать.

Государство уйӑракан укҫа-тенкӗн чылай пысӑк пайне машиностроени комплексне аталантарма тата модернизацилеме яраҫҫӗ. 1988 ҫулта ҫак тӗллевпе 105,8 миллион тенкӗпе усӑ курнӑ, Ку вӑл государство уйӑрнӑ укҫа-тенкӗн 62,4 процентне пулать.

Анчах государство укҫи-тенкине нумай стройка тӑрӑх сапаласа ярасси вӗҫленмест-ха, ҫакӑ объектсене нормӑпа палӑртнӑ вӑхӑтра вӗҫлеме чӑрмантарать. 1985 ҫулта государство уйӑрнӑ кашни пӗр тенкӗ пуҫне ҫулталӑкра вӑтамран 97 пусӗпе усӑ курнӑ, 1988 ҫулта — 80 пус, е 17,5 процент сахалрах пулнӑ. Ҫавӑнпа та государство уйӑракан укҫа-тенкӗ эффективлӑхне ӳстерессипе тата пӗтӗм строительство ӗҫне ҫӗнетсе лайӑхлатасси малтанхи пекех ҫивӗч ыйту пулса тӑрать.

Укҫа-тенкӗ

ПРЕДПРИЯТИСЕМПЕ пӗрлешӳсем ӗҫленипе 1989 ҫулта 456,6 миллион тенкӗ тупӑш илме палӑртнӑ, планран иртерсе илнӗ тупӑш 42.9 миллион тенкӗлӗх пулать. Хуҫалӑх расчечӗн иккӗмӗш моделӗпе тата аренда подрячӗпе ӗҫлекен предприятисем 20 миллион ытла тенкӗлӗх тупӑш илеҫҫӗ, ҫав шутра планран иртерсе илекен тупӑш — 16 миллион тенкӗлӗх пулать.

Ҫавӑнпа пӗрлех кивелнӗ продукципе тӑкакланакан укҫа-тенкӗ, производствӑна ҫителӗксӗр йӗркеленипе тата кирлӗ пек тытса пыманнипе сиксе тухакан ҫухатусемшӗн, договорти обязательствӑсене тата планпа учет дисциплинине пӑснӑшӑн тӳлеме кайакан укҫа-тенкӗ тупӑшпа таса тупӑш виҫине чакараҫҫӗ.

1989 ҫулхи тӑхӑр уйӑхра хула промышленноҫӗнче кивелнӗ продукципе япӑх пахалӑхлӑ продукцишӗн тӳлесе 1,7 миллион тенкӗ тӑкакланӑ, хӑйсем тӳлеттернӗ штрафран 159 пин тенкӗ нумайрах штраф тӳленӗ. Продукци ярса памалли обязательствӑсене пурнӑҫламаншӑн предприятисем 668 пин тенкӗлӗх штраф тӳленӗ.

Промышленноҫра тупӑш ӳссе пыни предприятисемпе пӗрлешӳсене экономика тӗлӗшӗнчен хавхалантармалли фондсене укҫа-тенкӗ ытларах уйӑрма май парать. Ҫав вӑхӑтрах предприятисем хӑйсен укҫи-тенкипе ҫителӗксӗр усӑ кураҫ-

Суйлав умӗн

КАМӐН ПРАВИ ПЫСӐКРАХ?

«Коммунизм ялавӗ» хаҫат редакцийӗ «ҫавра сӗтел» хушшинче халӑх депутачӗсемпе ирттернӗ калаҫуран

Шупашкартан Сӗнтӗрвӑрри хулине ҫӳрекен автобус кӗҫ-вӗҫ тапранса кайӗ умӗн алӑкра ватӑ хӗрарӑм курӑнчӗ. Ҫурӑмӗ хыҫне ҫакнӑ хура кутамкка ӑна ансӑр алӑкран кӗме самаях чӑрмантарать-мӗн. Шофер ҫакна ҫийӗнчех асӑрхарӗ.

— Ан васка, асанне. Ерипен кӗр-ха, — терӗ вӑл, ватӑ ҫынна кутамккине хывма пулӑшса.

Тӑп-тӑп тумланнӑ ҫамрӑк хӑй вырӑнне ларма сӗнчӗ. Кинемей ҫамрӑка чун ӑшшипе тав турӗ.

— Ывӑл-хӗрӳсем патӗнче хӑнара пулса куртӑр-и! — сӑмах хушрӑм.

— Ҫу-у-к, нушапа ҫӳретӗп. Пытармасӑр каласан, мачча кашти тума пӗрене шыратӑп. Кирпӗчпе йывӑҫ сутакан магазина килсе пӑхрӑм. Анчах ывӑнса ҫӳренин усси пулмарӗ. Кунта та ҫук, — тарӑхнӑ сасӑпа хуравларӗ вӑл.

Калаҫсан — сӑмах, кассан — турпас, тенӗ пек, сӑмах хыҫҫӑн сӑмах тупӑнчӗ. Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи «Кугеевский» совхозран килнӗ иккен вӑл. Ольга Алексеевна Кузнецова. Тивӗҫлӗ канӑва тухнӑ, 130 тенкӗ пенси илет. Кӑҫал ҫӗнӗ пӳрт лартма шут тытнӑ. Малтанхи вӑхӑтра кирпӗчпе йывӑҫ шыраса хӑшкӑлнӑ. Халӗ мачча кашти ҫуккипе пӗтӗм ӗҫӗ чарӑнса ларнӑ, платникӗсем пӑрахса кайнӑ. Инкек ҫине синкек тенӗ пек, упӑшки йывӑр чирпе ураран ӳкнӗ.

— Совхоз директорӗнчен пулӑшу ыйтса пӑхмарӑр-и! — терӗм.

— Пултӑм, кӗлмӗҫленсех ыйтрӑм. Анчах усси пулмарӗ. Пушӑ алӑпа каялла тухса утрӑм. Совхоз директорӗ Юрий Александрович Николаев ял Совечӗн ӗҫтӑвкомӗнчен ыйтса пӑхма сӗнчӗ. Унта ҫӳресе вӑхӑта та иртерес мар, терӗм. Пӗрех нимӗн те ҫук вӗсен. Хӑйсен кантурне те, ав, юсаймаҫҫӗ, — ассӑн сывларӗ Ольга Алексеевна.

Ял тата хула Совечӗсен ӗҫтӑвкомӗсем уйрӑм ҫынсене пулӑшу пама мӗншӗн вӑй ҫитереймеҫҫӗ-ха! Вырӑнти власть, тетпӗр-ҫке вӗсене. Сӗнтӗрвӑрри район Совечӗн ӗҫтӑвкомӗнче ирттернӗ «ҫавра сӗтел» хушшинчи калаҫура ҫак ыйтусене ҫивӗч хускатрӗҫ. Калаҫӑва Сӗнтӗрвӑрри хула, Ҫатракасси ял Совечӗсен ӗҫтӑвкомӗсен председателӗсем Н. Ф. Алексеевпа И. М. Шоклев, Сӗнтӗрвӑрри район Совечӗн депутачӗсем В. Н. Агатеевӑпа В. П. Тимофеев тата район Совечӗн ӗҫтӑвкомӗн председателӗн заместителӗ Л. Г. Николаева хутшӑнчӗҫ.

Н. Алексеев: Вырӑнти Советсен тата вӗсен ӗҫтӑвкомӗсен прависене пысӑклатасси, урӑхла каласан, хӑйсен территорийӗсенче вӗсене чӑн-чӑн хуҫа туса хурасси пирки нумай калаҫатпӑр. Ку ыйтупа партипе правительство та тивӗҫлӗ решенисем йышӑннӑ. Анчах чылайӑшӗ хут ҫинче ҫеҫ тӑрса юлнӑ. Тӗрлӗ сӑлтавсенчен килет ку. Тӗслӗхрен, акӑ, хамӑрӑн хула Совечӗпе унӑн ӗҫтӑвкомӗн ӗҫнех илер. Сессисемпе ӗҫтӑвком ларӑвӗсене палӑртнӑ вӑхӑтра иртеретпӗр. Вӗсенче хуҫӳтсе явакан кашни ыйту хула тата унта пурӑнакансен пурнӑҫӗпе ҫыхӑннӑ. Эпир те, ҫӳлтисем пекех, ӗҫлӗ решенисем йышӑнатпӑр. Шел пулин те, пурне те пурнӑҫа кӗртме май килмест. Акӑ мӗншӗн. Хула ватӑ. Пурӑнмалли ҫуртсенчен нумайӑшӗ кивелнӗ, юрӑхсӑра тухнӑ. Пӗрне тӗпрен юсамалла. Теприне пӑсса ҫӗнӗрен тумалла. Кирпӗч, цемент тата йывӑҫ ҫук. Хула Совечӗн ӗҫтӑвкомне питӗ шутлӑ параҫҫӗ вӗсене. Укҫа-тенкӗ те сахал. Ҫӗнӗрен тумалли, юсамалли вара туллиех. Кӑҫал Фрунзе урамӗнче 400 метр тӑршшӗ шыв пӑрӑхӗ хутӑмӑр. 3-мӗш Нагорная урамра шыв колонкисем лартрӑмӑр. Кашни 8 кил-ҫурт валли пӗр колонка пулмалла. Урамсене, кӗперсене юсамалла. Пире пурӗ те 80 пин тенкӗ ҫеҫ укҫа уйӑрса панӑ. Халӗ хулана сутҫанталӑк газӗ кӗртетпӗр. Пӑрӑхсем тата ытти хатӗрсем кирлӗ.

Хулара промышленность предприятийӗсем пур, теҫҫӗ. Тӗрӗс. Анчах ҫакна каласа хӑварни те вырӑнлӑ. Хулана тата района чи кирлӗ предприятисене — сӗт-ҫу заводне, тутлӑ шывпа пӗремӗксем пӗҫерекен цеха, выльӑх пусакан пункта пӗтернӗ. Кун пирки паян нумайӑшӗ кулянса калаҫаҫҫӗ. Епле калас-ман-ха? Тутлӑ шывпа пӗремӗ-

равленийӗ пирки асӑнса хӑварни шӑпах вырӑнлӑ. Ӳссе пыракан хулара вӑл — ҫав тери кирлӗ организаци. Унӑн пулӑшӑвӗсӗр нимӗнле ыйтӑва та ӑнӑҫлӑ татса пама ҫук. Анчах кама пӑхӑнать вӑл? Паллах, район Совечӗн ӗҫтӑвкомне. Эпир хамӑр хулара та хамӑр хуҫа мар иккен. Мӗншӗн тесен хула Совечӗн пурлӑх никӗсӗ тата техника ҫук.

Хулари ӗҫпе вӑрҫӑ ветеранӗсем района ертсе пыракансемпе ирттернӗ тӗлпулу халӗ те куҫ умӗнче тӑрать. Вӗсем хӑйсене мӗн кирлине ыйтма ирӗк пур, пирӗн — тивӗҫтерме тӑрӑшмалла. Ватӑ ҫынсем хулара уйрӑм магазин уҫма ыйтаҫҫӗ. Сывлӑхӗ хавшанӑ ҫынсене ҫамрӑксемпе пӗртан черетре тӑма йывӑр. Анчах ҫак ыйтӑва татса пама пултараймастпӑр. Хула Совечӗн ӗҫтӑвкомне ун пек право паман.

Тата ҫакна каласшӑн: хула Совечӗсен прависемпе тивӗҫӗсене законпа ҫирӗплетмелле. Чӑваш АССР Конституцийӗнче уҫӑмлӑ ҫырса палӑртмалла.

И. Шоклев: Хула хуҫалӑхӗ — каткӑс хуҫалӑх. Унӑн Совечӗсен тата ӗҫтӑвкомӗсен пӗр вӑхӑтрах вуншар тӗрлӗ ыйту татса пама тивет. Кун пек чухне район Совечӗн ӗҫтӑвкомӗ хула Совечӗпе унӑн ӗҫтӑвкомне те хӑш ыйтӑва маларах татса пама кирлине суйласа илме пулӑшмалла.

Ял Совечӗн ӗҫӗнче те татса паман ыйтусем пайтах-ха. Эпир, чи малтанах, ял Совечӗн ӗҫтӑвкомӗн, яланхи комиссисен тата депутатсен ӗҫне тӗрӗс йӗркелеме вӗренсе ҫитеймен. Ҫак сӑлтава пула ӗҫҫыннисен нумай тӗрлӗ ыйтӑвӗсене вӑхӑтра шута илме, пур енлӗ тишкерсе вӗренме кирлине манӑса хӑваратпӑр.

Пирӗн ҫӗршывра ҫӗнӗ саманан пӗрремӗш кунӗнчех «Пӗтӗм влаҫа — Советсене» тенӗ. Анчах пурнӑҫ тепӗр

ти ӗҫчен ҫынсенчен пӗри пулни курӑнать.

Ял Совечӗн сессийӗнче, ӗҫтӑвкомӑн ларӑвӗсенче депутатсен отчечӗсене тӑтӑшах итлетпӗр, решенисем йышӑнатпӑр. Вӗсенче депутатсен сӗнӗвӗсене тӗпе хуратпӑр. Депутатсем, хуҫалӑх производствине тӳрремӗнех хутшӑннӑ май, ӗҫлӗ сӗнӳсем параҫҫӗ. Ҫулла, сӑмахран, депутатсем пуҫарнипе харпӑр хӑй кил-ҫурчӗсенчи пахча вырӑнӗсемпе мӗнле усӑ курнине тӗрӗслесе тухрӑмӑр. Хӑшпӗрисен пахчинче ҫумкурӑк хуҫаланни пурне те тӗлӗнтерчӗ. Хуҫисем камсем тетӗр? Совхозри специалистсем. Самаях хӗрелме тиврӗ вӗсен.

Кун пек тӗслӗхсем кашни ялтах пур. Наянсемпе кахалсем пирки мӗн чухлӗ ҫӗрулмипе пахчаҫимӗҫ ҫухатмастпӑр пулӗ!

В. Агатеева: Район Совечӗн ӗҫтӑвкомӗ депутатсемпе сахал ҫыхӑнать. Ӗҫлӗ сӗнӳсем пама пултаратпӑр. Эпӗ, сӑмахран, «Карабашский» совхозра уй-хир бригадине ертсе пыратӑп. Районти хуҫалӑхсем тухӑҫлӑ тырпул, ҫӗрулми, выльӑх апачлӗх культурӑсем туса илеҫҫӗ. Выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем туса илессинче те уйрӑмлӑх пысӑк. Ман шутпа, малта пыракан хуҫалӑхсен, бригадӑсен тата фермӑсен опытне тишкерсе вӗренме район Совечӗн депутачӗсен уйрӑм ушкӑнне туса ҫирӗплетмелле.

В. Тимофеев: Эпир сессисен вӑхӑтӗнче кӑна пӗр-пӗринпе тӗл пулса калаҫатпӑр. Кун пек мӗслетпе районпа е уйрӑм хуҫалӑхпа ял Совечӗ умӗнче тӑракан задачӑсене ӑнӑҫлӑ татса пама май ҫук. Ҫатракасси ял Совечӗн председателӗ Илья Михайлович Шоклев ял Совечӗн паянхи ӗҫ-хӗлӗпе шӑпи пирки каларӗ ӗнтӗ. Чӑн та, ялта паян кам хуҫа-ши? Тӳрех калатӑп: пиве çумалли машинасем — [illegible] штук, «Азамат» магнитолăсем — 2,6 пин штук, «Хĕвел» электровентиляторсем — 16 пин штук, сĕтел-пукан — 602 пин тенкĕлĕх.

1989 çулта хула промышленноçĕнче 287 тĕрлĕ çĕнĕ йышши халăха кирлĕ таварсем туса кăларма пуçланă, вĕсенчен 259 тĕрлĕ таварсене — çăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçĕн предприятийĕсенче.

Анчах туса кăларакан таварсен шучĕпе ассортименчĕ халăхăн ÿссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтермест. Машиностроени комплексĕн предприятийĕсем вĕсене туса кăларас- [illegible] кăларассĕ. Промышленноçра, пĕтĕмĕшле илсен, ĕç укçи фончĕн кашни тенки пуçне халăха кирлĕ таварсем туса кăларассăн 2 тенкĕ те 71 пуспа танлашать пулсан, «Шупашкарти промышленность тракторĕсен завочĕ» производство пĕрлешĕвĕнче — 9 пуспа, машинăсем туса кăларакан заводра — 45 пуспа, агрегат заводĕнче — 50 пуспа, электроаппаратура заводĕнче — 29 пуспа, приборсем тăвакан заводра 37 пуспа танлашать.

1989 çулта ваккăн сутмалли таварçавранăшĕн пĕтĕмĕшле калăпăшĕ, обществăлла апатлану предприятийĕсен таварçавранăшне пĕрле шута илсен, 606.7 миллион тенкĕлĕх пулнă. Çакă танлаштарулла хаксем тăрăх 1985 çулхи шайран 32.3 процент е 148,1 миллион тенкĕлĕх ытларах. Хулара кашни çын пуçне ваккăн сутмалли таварçавранăшĕ пĕлтĕр, 1985 çулхи 1.115 тенкĕпе танлаштарсан, 1.340 тенке çитнĕ.

Хулари виççĕре яхăн предприятипе организаци халăха пулăшу ĕçĕсем туса парассипе çыхăннă. 1987 çулта тÿлевлĕ пулăшу ĕçĕсем 81.4 миллион тенкĕлĕх туса панă пулсан, 1989 çулта — 106.3 миллион тенкĕлĕх. 30.6 процент ытларах пулăшу ĕçĕсем туса панă. 1989 çулта кашни çын пуçне пулăшу ĕçĕсем туса парасси 234 тенкĕ те 68 пуслăх, 1987 çулта 185 тенкĕ те 52 пуслăх пулнă.

Тÿлевлĕ пулăшу ĕçĕсене илес пулсан, кунта йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерни, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхра тĕрлĕ ĕçсем тума пулăшни тата транспорт ыйтăвĕ-

рăнлăх туса лартнă, пĕр сменăра 2,6 пин çынна йышăнма пултаракан поликлиникăсем ĕçе кĕртнĕ.

Сывлăха сыхласси, халăха вĕрентес ĕç тата культура

БОЛЬНИЦАСЕН тата амбулаторипе поликлиника учрежденийĕсен шучĕ ÿссе пырать. Юлашки çулсенче хулара республикăн стоматологи тата ачасен поликлиникине, отраслĕсен пĕрлĕхи «Куç микрохирургийĕ» наука-техника комплексĕнĕ, приборсем тăвакан заводăн медсанчасне тата ытти объектсем хута янă. Çакă больницăсенче койка-вырăнсемпе тивĕçтерессине 114,4 пин çынна çити ÿстерме май панă. 1988 çулта, сăмахран, койка-вырăнсемпе 10 пин çынна тивĕçтернĕ.

Сывлăх учрежденийĕсенче 13,7 пин çын, çав шутра 2,4 пин врач тата 5,3 пин вăтам медперсонал ĕçлет.

1989 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне кашни 10 пин çын пуçне 51,2 врач, 111,2 вăтам медперсонал пулнă.

1989/90 вĕренÿ çулĕ пуçланнă тĕле хулара пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан кăнтăрлахи вăтам шкулсем пурĕ 60 ĕçленĕ, вĕсенче вĕренекенсен йышĕ 59.3 пин çынна çитнĕ. 1985/86 вĕренÿ çулĕпе танлаштарсан, кăнтăрлахи пĕтĕмĕшле вăтам пĕлÿ паракан шкулсем тата 10 шкул туса лартнă, вĕсенче вĕренекенсен шучĕ — 8,7 пин çын чухлĕ ÿснĕ.

Çапах та хулара шкулсенче темиçе сменăпа вĕренессине пĕтерме май килмен. 12.5 пин ача иккĕмĕш сменăра вĕренет.

Вăрăмлатнă кун йĕркипе ĕçлекен ушкăнсене çÿрекен ачасен шучĕ 1988/89 вĕренÿ çулĕнчи 12,2 пин çынран 1989/90 вĕренÿ çулĕнче 13,5 пин çынна çити ÿснĕ. Вĕсен пĕтĕмĕшле йышĕ 21,3 процентран 22,8 процента çити нумайланнă.

Хулари шкулсенче вĕренекенсене ĕçлеме вĕрентеççĕ. Вĕренÿ çулĕ пуçланнă тĕле вĕсем валли 22,9 пин ытла ĕç вырăнĕ хатĕрленĕ.

1989 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне хулара шкул çулне çитмен ачасен учрежденийĕсем 198 пулнă. 1985 çулхипе танлаштарсан, вĕсен шучĕ 26 чух-

сенче лармалли вырăнсем шучĕ 10,2 пин пулнă, çакă вăл, 1985 çулхипе танлаштарсан, 29 процент нумайрах.

Ырлăх-пурлăх производстви

Наука-техника прогресĕ

ХАЛЬХИ пилĕкçуллăхри виçĕ çулпа тăхăр уйăхра хула промышленноçĕнче 2 пин ытла комплекслă механизациленĕ тата автоматлă оборудованипе усă курма пуçланă, 93 участока, цеха, производствăна комплекслă механизациленĕ тата автоматизациленĕ, 120 ытла потокпа механизаци, çурмаавтомат тата автомат линийĕсем вырнаçтарса лартнă, производствăра 570 ытла прогрессивлă технологи процесĕпе усă курма пуçланă.

Предприятисем производствăна çĕнĕ техникăпа пуянлатас тĕллевпе 1988 çулта 53.7 миллион тенкĕ тăкакланă, вĕсенчен 92.6 процентне — производствăн техника шайне çĕклеме, 7,4 процентне çĕнĕ йышши промышленность продукцийĕ туса илессине алла илме янă. Çĕнĕ техника туянса вырнаçтарса лартмалли пĕр ĕçе пурнăçлама уйăракан тăкаксем, 1985 çулхи 19,4 пин тенкĕпе танлаштарсан, 1988 çулта 16,86 пин тенке çити чакнă.

Промышленность производствин техника шайне ÿстернипе продукци хăйхаклăхне чакарма май килнĕ, çапла майпа 12,9 миллион тенкĕ перекетлĕсе хăварнă, 3,2 пин çынна йывăр ĕçрен хăтарнă.

Техника прогресне хăвартлатас ĕçре рационализаторсемпе изобретательсен пĕлтерĕшĕ ÿссе пырать. 1988 çулта вĕсен йышĕнче 11,5 пин çын пулнă, пурĕ вĕсем 10,0 пин ытла рационализаторла сĕнÿ тата изобретени валли 431 заявка панă. 256 çын изобретенисемшĕн автор свидетельствине илме тивĕçлĕ пулнă. Изобретенисемпе тата рационализаторла сĕнÿсемпе усă курса 32,7 миллион тенкĕ перекетлĕсе хăварма май килнĕ.

приятисене ĕç коллективĕсем арендăна илеççĕ. Хальхи вăхăтра тăватă предприяти тупăшсене норма тăрăх валеçмелли формăпа усă курать, икĕ предприяти аренда подрячĕпе ĕçлет.

Предприятисене хуçалăха тытса пымалли çĕнĕ условисем çине куçарни продукци ярса памалли дисциплинăна лайăхлатма пулăшрĕ. 1989 çулта продукци калăпăшне, договорти обязательствăсене шута илсе, 99,4 процент пурнăçланă (1988 çулта 99 процент пулнă).

Капитальнăй строительство

ХУЛАРА капитальнăй строительство анлă сарăлнă. Çак пилĕкçуллăхăн тăватă çулĕнче производство объекчĕсем тата производствăпа çыхăнман ытти объектсем пурĕ 998,4 миллион тенкĕлĕх ĕçе кĕртнĕ, çакна валли государство 1115,5 миллион тенкĕ тăкакланă. Пилĕкçуллăхăн тăватă çулĕн планне — тĕп фондсене хута ярас енĕпе — 22,3 миллион тенкĕлĕх, государствăн уйăрнă укçа-тенкĕпе усă курас енĕпе — 44,1 миллион тенкĕлĕх пурнăçланă.

1986—1989 çулсенче çак объектсене вĕçлесе хута янă: талăкра 72 тонна çăкăр-булка изделийĕсем пĕçерсе, 840 тонна кондитер изделийĕсем хатĕрлесе кăларакан çăкăр завочĕ, «Текстильмаш» производство пĕрлешĕвĕнче 5,9 пин тăваткал метр лаптăк йышăнакан йăла пÿлĕмĕсен корпусĕ, «Шупашкарти промышленность тракторĕсен завочĕ» производство пĕрлешĕвĕнче 1-мĕш цехăн 19,4 пин тăваткал метр лаптăк йышăнакан блок комплексĕ тата çулталăкра 10 пин тонна чугун шăратакан цех, ЖБК-9 заводăн 15 кубометр полистироль пенопласчĕ туса кăларакан цехĕ, «Вторчермет» предприятире 24 тонна тимĕр-тăмăр шăратакан цех, «Продтовары» суту-илÿ пĕрлешĕвĕнче 2 пин тонна продукци тытса упрамалли холодильник тата ытти нумай объектсем.

Çак пилĕкçуллăхăн тăватă çулĕнче социаллă сферăна аталантарма укçа-тенкĕ ытларах уйăрма пуçланă. 1985 çулта çак тĕллевпе 71,6 миллион тенкĕ, 1989 çулта 115,9 миллион

Çакăнпа пĕрлех кивелнĕ продукципе тăкакланакан укçа-тенкĕ, производствăна çителĕксĕр йĕркеленипе тата кирлĕ пек тытса пыманнипе сиксе тухакан çухатусемшĕн, договорти обязательствăсене тата планпа учет дисциплинине пăснăшăн тÿлеме каякан укçа-тенкĕ тупăшпа таса тупăш виçине чакарассĕ.

1989 çулхи тăхăр уйăхра хула промышленноçĕнче кивелнĕ продукципе япăх пахалăхлă продукцишĕн тÿлесе 1,7 миллион тенкĕ тăкакланă, хăйсем тÿлеттернĕ штрафран 159 пин тенкĕ нумайрах штраф тÿленĕ. Продукци ярса памалли обязательствăсене пурнăçламанăшăн предприятисем 668 пин тенкĕлĕх штраф тÿленĕ.

Промышленноçра тупăш ÿссе пыни предприятисемпе пĕрлешÿсене экономика тĕлĕшĕнчен хавхалантармалли фондсене укçа-тенкĕ ытларах уйăрма май парать. Çав вăхăтрах предприятисем хăйсен укçи-тенкипе çителĕксĕр усă кураççĕ. Сăмахран, пурлăхпа хавхалантармалли фонд тăрăх илес пулсан, 1989 çулхи тăхăр уйăхра пĕтĕм укçа-тенкĕн 63,5 процентне, социаллă пурнăçпа культура мероприятийĕсен тата пурăнмалли çурт-йĕр тумалли фонд тăрăх — 78,4 процентне, производствăна, наукăпа техникăна аталантармалли фонд тăрăх 90,6 процентне усă курнă.

Производствăна, наукăпа техникăна аталантармалли фондри укçа-тенкĕн çуррине ытла (60,6 процентне е 86,2 миллион тенкĕ) капитальнăй строительство валли уйăрнă, ытти 8,6 процентне (12,2 миллион тенкĕ) наука тĕпчев тата конструктор ĕçĕсем иртерме кайнă.

Социаллă-культурăллă мероприятисен фондĕнчен 43,3 процентне е 20,9 миллион тенкĕ пурăнмалли çурт-йĕр тума тата социаллă пурнăçпа культура сферин пурлăхпа техника никĕсне çирĕплетме уйăрнă. Сывлăха çирĕплетмелли мероприятисем, культурăпа çутĕç тата физкультура мероприятийĕсем иртерме 14,4 процент е 6,9 миллион тенкĕ тăкакланă.

ШУПАШКАР ХУЛИН СТАТИСТИКА ПАЙĔ.

УКРАИНА ССРĔ. Одессăри В. П. Филатов академик ячĕпе хисепленекен куç чирĕсемпе тĕртĕмсен терапийĕн наука тĕпчев институтĕнчи медик-ученăйсем куç шăрçи тавра вырнаçнă çаврашкана искусственнăй материалтан тумалли меслет шырăса тупнă, çав çаврашкана куçа лартнă.

Çак меслет çынна СПИДпа чирлес хăрушлăхран сыхлать.

Институтра куç чирĕсенчен нумайăшĕ аталаннин сăлтавĕсемпе майĕсене теори тĕлĕшĕнчен тĕпчеççĕ. Вĕсен ĕçĕ куç чирĕсене палăртмалли çĕнĕ меслетсем тупма, куç чирĕсенчен эмелсемпе тата хирурги меслечĕпе сыватма пулăшĕ.

Институт СШӐри, Грецири, Югославири, Демократиллĕ Германи Республикинчи, Польшăри, Болгăрири специалистсемпе наука енĕпе килĕштерсе ĕçлет.

Çак ача суккăр çуралнă. Унăн куç шăрçи тавра искусственнăй материалтан тунă çаврака вырнаçтарнă хыççăн Саша куракан пулнă. Сулахайран сылтăмалла: Саша амăшĕ Т. М. Мандзюк, Е. Д. Шаповалова медсестра, окулист-врач Л. А. Суходеева тата институт уйрăмĕн заведующийĕ медицина наукисен кандидачĕ Н. Ф. Боброва (операцие вăл ирттернĕ).

И. Павленко фотоÿкерчĕкĕ.
(ТАСС фотохроники).

кивелнĕ, юрăхсăр тухнă. Пĕрне тĕпрен юсамалла. Теприне пĕсса çĕнĕрен тумалла. Кирпĕч, цемент тата йывăç çук. Хула Совечĕн ĕçтăвкомне питĕ шутлă параççĕ вĕсене. Укçа-тенкĕ те сахал. Çĕнĕрен тумалли, юсамалли вара туллиех. Кăçал Фрунзе урамĕнче 400 метр тăршшĕ шыв пăрăхĕ хутăмăр. 3-мĕш Нагорная урамра шыв колонкисем лартрăмăр. Кашни 8 кил-сурт валли пĕр колонка пулмалла. Урамсене, кĕперсене юсамалла. Пире пурĕ те 80 пин тенкĕ çеç укçа уйăрса панă. Халĕ хулана сутçанталăк газĕ кĕртетпĕр. Пăрăхсем тата ытти хатĕрсем кирлĕ.

Хулара промышленность предприятийĕсем пур, теççĕ. Тĕрĕс. Анчах çакна каласа хăварни те вырăнлă. Хулана тата района чи кирлĕ предприятисене — сĕт-су заводне, тутлă шывпа пĕремĕксем пĕçерекен цеха, выльăх пусакан пункта пĕтернĕ. Кун пирки паян нумайăшĕ кулянса каласаççĕ. Епле каласмăн-ха? Тутлă шывпа пĕремĕке тата сĕтпе кефира Шупашкартан турттарса килме тивет. Хакла ларать. Района ертсе пыракансем тăтăшах улшăнса тăраççĕ. Пĕрисем сăмах парса йăпатма тăрăшаççĕ. Теприсем çÿлтен хушасса кĕтеççĕ. Вĕсем чылай вăхăт хушши пĕр вырăнта çирĕпленсе ĕçлеменни икĕ вĕçлĕ патак пекех килсе тухать. Пĕр енчен, хула тата район нушисене пур енлĕ тĕпчесе вĕренме вăхăт çитмест. Тепĕр енчен, хула пурнăçĕпе çыхăннă ыйтусене тĕплĕн тĕпчесе вĕренмесĕр, суйлавçăсен наказĕсене тĕпе хумасăр сăмăлттайла татса параççĕ. Коновалово микрорайонта пурăнмалли çуртсем, магазинсемпе йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен ытти учрежденисем тăвассинех илер. Кунта 5 пин çын ытла пурăнать. Чи кăткăс ыйтусенчен пĕри вăл — шыв çитменни. Шыв парса тăракан станцие вăхăтран-вăхăта чарма тивет. Магазинсемпе столовăйсем, йăла çурчĕ, мунча çук. ОРС промышленность таварĕсемпе апат-çимĕç магазинĕсене юсама хупнă, Халĕ çăкăр-тавар туянма та кивĕ хулана çÿреме тивет. Çĕнĕ микрорайонта кинотеатр, Культура çурчĕ çукки кунта пурăнакансене хытă пăшăрхантарать.

Хăшĕсем «хула Совечĕн ĕçтăвкомĕн председателĕ мĕншĕн çак ыйтусене хускатать-ши? Хăйĕн хулинче хăй хуçа пулмалла», — тесе калама пăхĕç. Тĕрĕс. Анчах, район центрĕ хулара вырнаçнă пирки, пирĕн виçĕ хуçа. Предприятисен руководителĕсем кирек мĕнле ыйтупа та район Совечĕн ĕçтăвкомне е КПСС райкомне пыраççĕ. Вĕсен, паллах, вăраха ямасăр татса памалли ыйтусем çук мар. Пĕрисен, калăпăр, хула территорийĕнче пурăнмалли çурт е ача-пăча сачĕ лартмалла. Çĕр кирлĕ. Эпир кун пирки кайран çеç пĕлетпĕр. Çурт-йĕр тăвакан предприятисемпе организацисен коммуналлă хуçалăх ыйтăвĕсене татса пама та пулăшмалла.

Тепĕр енчен, района ертсе пыракан органсен хула Совечĕн тата унăн ĕçтăвкомĕн авторитечĕ сиччен маималла мар. Хулара шыв е электроэнерги пулмасан, тÿрех пирĕн пата шăнкăравлаççĕ е пĕлтереççĕ. Кун пек чухне эпир, хула Совечĕн ĕçтăвкомĕ айăплă. Кунта пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн производство уп-

пултараймастпăр. Хула Совечĕн ĕçтăвкомне ун пек право паман.

Тата çакна каласшăн: хула Совечĕсен прависемпе тивĕçĕсене законпа çирĕплетмелле. Чăваш АССР Конституцийĕнче уçăмлă çырса палăртмалла.

И. Шоклев: Хула хуçалăхĕ — кăткăс хуçалăх. Унăн Совечĕсен тата ĕçтăвкомĕсен пĕр вăхăтрах вуншар тĕрлĕ ыйту татса пама тивет. Кун пек чухне район Совечĕн ĕçтăвкомĕ хула Совечĕпе унăн ĕçтăвкомне те хăш ыйтăва маларах татса пама кирлине суйласа илме пулăшмалла.

Ял Совечĕн ĕçĕнче те татса паман ыйтусем пайтах-ха. Эпир, чи малтанах, ял Совечĕн ĕçтăвкомĕн, ялахри комиссисен тата депутатсен ĕçне тĕрĕс йĕркелеме вĕренсе çитеймен. Çак сăлтава пула ĕççыннисен нумай тĕрлĕ ыйтăвĕсене вăхăтра шута илме, пур енлĕ тишкерсе вĕренме кирлине манăса хăваратпăр.

Пирĕн çĕршывра çĕнĕ саманан пĕрремĕш кунĕнчех «Пĕтĕм влаçа — Советсене» тенĕ. Анчах пурнăç тепĕр майлă килсе тухрĕ. Яллă вырăнсене илер-ха. Кашни колхоз е совхоз пĕр-пĕр ял Совечĕн территорине кĕрет. Апла пулсан, вырăнти власть чăн-чăн хуçа пулмалла пек. Вăл йышăнакан решенисене колхоз правленийĕ те, совхоз дирекцийĕ те пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пыма тивĕçлĕ. Чăннипе илсен, çакна курмастпăр.

Хуçалăха ертсе пыракансем ял Совечĕн сессийĕсене е ĕçтăвкомăн ларăвĕсене пыма та, пымасăр юлма та пултараççĕ. Çакна ăнлантарса пама йывăрах мар. Района ертсе пыракансем колхоза е совхоза çитсен, пĕрремĕш утăм хуçалăх кантурĕ енне тăваççĕ. Кун пек йăла-йĕркене республика центрĕсенчен килекен хăшпĕр руководительсен ĕçĕнче те курма пулать. Вырăнти влаçа авторитет вырăнне хумаççĕ вĕсем.

Вырăнти Советсен ĕçтăвкомĕсемпе тата депутатсемпе пĕр сĕтел хушшине ларса канашламанни кадрсене суйласа илес, воспитани парас ĕçре те йăнăш утăмсем патне илсе пырать. Пирĕн çинчен пачах аса илмеççĕ теме çук. Анчах хăçан тата хăш вăхăтра? Тÿрех калатăп: хуçалăх государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем сутас енĕпе юлса пыма тытăнсан. Кун пек чухне ял çыннисенчен аш-какайпа сĕт сутăн илессине вăйлатма ыйтаççĕ. Çав вăхăтрах ял çыннисене утă-улăмпа тырă вăхăтра пама кирлине манăса хăвараççĕ.

Пĕрлешсе пысăкланнă кашни хуçалăх темиçе ялтан тăрать. Кашни ялтах çĕнĕ çурт лартакансем те, киввисене юсакансем те пур. Чи малтан, паллах, ял Совечĕн ĕçтăвкомне пыраççĕ. Пĕри — кирпĕч е цемент, тепри йывăç ыйтать. Анчах ял Совечĕн ĕçтăвкомĕн пĕр нуша — строительство материалĕсем питĕ сахал уйăрса параççĕ. Район Совечĕн ĕçтăвкомĕнче те кун пирки уçăмлă калаймаççĕ.

Колхозра е совхозра çĕнĕ вите е обществăлла çурт тумалли тупăнсах тăрать. Строительство материалĕсем нумай кирлĕ. Кунта, паллах, мăчча кашти тума кирлĕ пĕр пĕрене пирки сăмах пымасть. Ăна кирек хăш хуçалăхра та, кирек хăш вăхăтра та тупма пулать. Тепĕр тесен, совхоз производствинчен пенсие тухнă çынна пулăшасси пирĕн таса тивĕç. Уйăхра 130 тенкĕ пенси илет пулсан, ял-

мĕн чухлĕ çĕр-улмипе пахчаçимĕç çухатмастпăр пулĕ!

В. Агатеева: Район Совечĕн ĕçтăвкомĕ депутатсемпе сахал çыхăнать. Ĕçлĕ сĕнÿсем пама пултаратпăр. Эпĕ, сăмахран, «Карабашский» совхозра уй-хир бригадине ертсе пыратăп. Районти хуçалăхсем тухăçлă тырпул, çĕрулми, выльăх апачлăх культурăсем туса илеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илессинче те уйрăмлăх пысăк. Ман шутпа, малта пыракан хуçалăхсен, бригадăсен тата фермăсен опытне тишкерсе вĕренме район Совечĕн депутачĕсен уйрăм ушкăнне туса çирĕплетмелле.

В. Тимофеев: Эпир сессисен вăхăтĕнче кăна пĕр-пĕринпе тĕл пулса калаçатпăр. Кун пек меслетпе районпа е уйрăм хуçалăхпа ял Совечĕ умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлă татса пама май çук. Çатракасси ял Совечĕн председателĕ Илья Михайлович Шоклев ял Совечĕн ĕçтăвкомĕсен паянхи ĕçĕ-хĕлĕпе шăпи пирки каларĕ ĕнтĕ. Чăн та, ялта паян кам хуçа-ши? Тÿрех калатăп: пирĕн ялсенче совхоз директорĕ хуçаланать. Вăл кăмăл тусан — автомашина уйăрса парассĕ. Вăл хирĕçлемесен — çурт-йĕр тума пултаратăп. Мĕншĕн тесен унăн аллинче транспорт тата ытти пурлăх. Мăчча кашти валли пĕр пĕрене ыйтма та ун патне каймалла тивет. Ял Совечĕн ĕçтăвкомĕ пулăшаймасть.

Л. Николаева: Ял Совечĕн тата унăн ĕçтăвкомĕн тивĕçĕ — вырăнти культура, медицина тата çутĕç учрежденийĕсен çурчĕсене тăвасси.

В. Тимофеев. Кун пек шухăшпа пачах килĕшме май çук. Колхоз е совхоз пуян пулсан, шкулпа больница çуртне те, клуб та тума пулать. «Кугеевский» совхоза, сăмахран, пĕлтĕр кашни гектартан 15 центнер тырă, 84 центнертан кăшт ытларах çĕрулми туса илнĕ. Уйрăм бригадăсенче хăмла тухăçĕ 5—8 центнертан та иртмен. Уй-хир паракан тупăш пысăк мар. Апла пулсан, хуçалăха тĕреклетес ĕçе ял Совечĕпе унăн депутачĕсем тÿрремĕнех хутшăнмалла. Ку — кашни ял Совечĕпе район Совечĕн депутачĕсен тивĕçĕ.

Пĕтĕм влаçа — Советсене, тетпĕр пулсан, çĕппе Советсен хуçа пулмалла.

Л. Николаева: Советсен пирĕн пурнăçри вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ çинчен сăмах тапратнă чухне СССР Конституцийĕн 6-мĕш статйи пирки каламасăр иртме пултараймастпăр. Çĕршыв çĕнетÿ çулĕпе малалла кайнă май, партин обществăри вырăнĕ те улшăнса пырать. Вăл администрацийпе команда системин уйрăлми пайĕ пулса тăмасть. Акă мĕншĕн СССР Тĕп Законне хушăмсемпе улшăнусем кĕртесси кун йĕркине тухса тăнă ĕнтĕ. Çĕнетÿ тапхăрĕнче обществăпа партире пулса иртекен улшăнусене пур енлĕ тишкерсе как памасăр, Конституцин 6-мĕш статйине кăларса пăрахни сăмăлттайла утăм туни пулĕччĕ.

Социализм строительствинче Советсен пĕлтерĕшĕ пысăк тата вĕсен ертсе пырас ролĕ ÿссе пырать. КПСС хăйĕн çул-йĕрне коммунист-депутатсен урлă пурнăçа кĕртсе пынине шăпах çакăнта курма пулать.

Калаçăва
В. КУЗНЕЦОВ
çырса илнĕ.

ХАМĂРА ЧĂВАШ ТЕНĔРЕН...

КПСС Центральнăй Комитечĕн 1989 çулхи сентябрьти Пленумĕ наци ыйтăвĕсене пысăк тимлĕхпе пăхса тухрĕ, ятарласа Платформа йышăнчĕ. Унта чылай кăткăс ыйту пирки тĕрĕс çул-йĕр палăртнă. Çав вăхăтрах тĕп ыйтăва — кашни халăх пĕртанлăхне туса хурассине, ман шутпа, пайăрласа татайман-ха. Автономиллĕ республикăсене ирĕклĕ пурăнма майсем туса памалла тени халлĕхе декларации евĕрлĕ кăна илтĕнет. Çакă автономиллĕ республикăсемпе облаçсенче ĕç-пуç йĕркеллĕх-ха текен шухăшпа çыхăннăн туйăнать. Чи хĕрӳ вырăнсем — союзлă республикăсем имĕш.

Пĕчĕк çăмăллăхсен стратегине пăрахăçлама, наци хутшăнăвĕсен тĕп ыйтăвĕсене татса пама вăхăт ĕнтĕ. Мĕнле ыйтусем-ха вĕсем — тĕпписем? Хамăра чăваш тенĕрен, кун пирки хамăр пурнăçа никĕсе хурса шухăшлар-ха.

РЕСПУБЛИКАРА тăван чĕлхе малашлăхне хĕрӳллĕн сӳтсе яваççĕ. Пĕрисем ăна патшалăх чĕлхи туса сумласшăн, теприсем вара килкартинчен те кăларасшăн мар.

Чăваш чĕлхине патшалăх шайне çитерме сĕмленекенсем «халиччен пире вăйпах вырăса кăларса пынă», теççĕ. Çавна май пирĕн наци ăнланулăхĕпе культури хавшаса çитнĕ, эппин, вĕсене май килнĕ таран хăвăртрах хĕмлентерсе ямалла иккен. Унсăрăн халăхăмăр умне халь-халь Гамлет ыйтăвĕ тухса тăма пултарать.

Чĕлхе вĕрентĕвĕнче, чăнах та, пĕр чĕлхе вĕçне юлас теори пур. Сăмах май, çав юлас чĕлхе вырăс чĕлхи тесе калаççĕ. Вăл темĕнле пур чĕлхе пуянлăхĕ витĕм кӳнипе пахаланнă япала пулмалла имĕш.

Апла-и, капла-и, истори ку теорие çирĕплетмест. Чăнах та, уйрăм тапхăрсенче ку е вăл чĕлхе ыттисенчен ытларах вăй илсе сарăлать (авал — латин, халĕ пирĕн çĕршывра — вырăс чĕлхи). Анчах пурăна-киле вĕсем каллех хавшаса каяççĕ е, хăйсем вырăнне хăйсенченех пулнă ытти чĕлхесене хăварса, пачах пĕтеççĕ (латин е авалхи славян чĕлхисем). Унашкал аталану-хавăшу хумĕсен вĕçĕ-хĕрри çук. Хальхи вăхăтра, калăпăр, акăлчан е испан чĕлхисем Çурçĕр Америка е Латинла Америка диалекчĕсене пайланаççĕ. Кам пĕлет, тен, вĕсенчен уйрăм чĕлхесем пулса кайĕç. Çак пулăм, тĕпрен илсен, ку е вăл халăх аталанăвĕпе, унăн ăс-хакăлĕ, культури ӳснипе е чакнипе, çавна май вăл ыттисене витĕм кӳме тытăннипе е пăрахнипе çыхăннă.

ЭППИН, чĕлхе пĕтет-тĕк, халăхĕ хăй те çут тĕнчере ĕмĕр-ĕмĕр пурăнма пултараймасть. Тĕрĕссипе, шăпах ĕнтĕ вăл хăй малтан пĕтет, унпа пĕрле чĕлхе те манăçа тухать. Çак пулăма тепĕр чухне халăх ячĕ юлни те чараймасть. Акă, VII ĕмĕрте пирĕн авалхи несĕлсен — Атăлçи пăлхарсен пĕр пайĕ Дунай тăрăхне куçса кайнă, вырăнти славянсене пăхăнтарса, Пăлхар патшалăхĕ туса хунă. Анчах халăх ячĕ кăна тăрса юлнă çав патшалăхра. Чăннипе пăлхарсем, вырăнти халăхпа пăтрашса-пĕрлешсе, хăйсем славянсем пулса тăнă.

Сăмах май, çакă вĕсене нимĕнле сиен те кӳмен. Эппин, «вырăсла тухассинчен» хăрамах та кирлĕ мар-тĕр. Экер çак

патша вăхăтĕнче, акă, чăваш шкулĕсем уçăлма тытăнаççĕ, XVIII ĕмĕр вĕçĕнче чăвашла кĕнеке те кун курать... Пĕтĕмĕшпе илсен, патша Раççейĕнче халăхсене вăйпах вырăса кăларнă, шыва кĕртнĕ тесе историксем хытă ӳстерсе калавăн туйăнать. Раççей — çĕр ытла халăхран тăракан конгломерат — наци вĕллине пăлхатманнипе кăна тытăнса тăнă, тен. Ахальтен мар II Кĕтерне «Пысăк наказра» çапла çырнă: «В толь великом государстве, распространяющем свое владение над толь многими разными народами, весьма вредный для спокойствия и безопасности своих граждан был порок, запрещение или недозволение их различных вер». Чăн та, чăвашсен пысăк пайĕ христианлăха йышăннă. Анчах ку унчченхи тĕн вăйсăрринчен кăна килнĕ пулĕ. Çавăнпа пĕрлех, авă, тĕне кĕмен чăвашсем ку таранчченех ялĕ-ялĕпе упранса юлнă. Мăсăльман тĕнне йышăнса тутара тухнă чăвашсене те тĕкĕнмен. И. Я. Яковлевпа И. Н. Ульянов вуншар чăваш шкулĕ уçни тата? Çак икĕ çын çав тери хастар, пултарулă пулнă та-ха, çапах патша правительствипе унăн хысни пулăшмасăр вĕсем те ку ĕçе тăваяс çукчĕ. Эппин, пире ĕлĕк хĕсĕрлесĕ вырăса кăларнă тесе татсăх калама кирлĕ мар-тăр...

ПИРĔН ПУБЛИЦИСТ ТРИБУНИ

АНЧАХ аталанусăр тапхăр тесен вара... Çапла, бюрократ-чиновниксем ун чухне пы-ысăк çитĕнӳсем турĕç. 1970—1979 çулсенче кăна халăхăн 5,6 проценчĕ чăваш чĕлхине тăван чĕлхе вырăнне хума пăрахнă. Республикăра паян ăна кашни вуннăмĕш чăваш йышăнмасть.

Паллă ĕнтĕ, малалла туртакан тĕп вăй вăл — тупăшу. Шăпах экономикăра, политикăра, идеологире тупăшу çукки пирĕн обществăна ахрат çырми патне илсе çитерчĕ. Вăл-ку енне кайсан, халăх пулăсси-пулмасси (истори шайĕпе илсĕн, паллах), эппин, унăн чĕлхипе культури аталанасси те тупăшуран килмелле. Ан тив, халăхсем пурте туслă пулччăр. Çав вăхăтрах кашни хăйĕн наци йăли-йĕркине тупăшса аталантартăр. Тен, хăшпĕр ыра енсем ыттисен кăмăлне кайĕç. Енчен те, калăпăр, çапла майпа латышсем пек культурăллă, атăлçи нимĕçсем пек пултаруллă, еврейсем пек интеллектлă, чăвашсем пек ĕçчен, тутарсем пек пĕр-пĕрне пулăшакан, белорусĕсем пек чăтăмлă, вырăссем пек уçă кăмăллă халăх пулса тăрсан, япăх-им?

Çакна палăртса хăварар: унашкал тупăшмашкăн пурин те тан майсем пулмалла. Уйрăмах чĕлхе тĕлĕшпе. Мă тесессĕн чĕлхе вăл çынсене пĕр-пĕринпе хутшăнма, шухăшлама, халăх ăслăлăхне пухма май паракан чи тĕп хатĕр. Анчах ачасене мĕн пĕчĕкрен вырăсла вĕрентеççĕ пулсан, çынсен тĕрлĕ инстанцире вырăсла кăна калаçма, хаçат-журнал, тĕпрен илсен, вырăсла çеç вулама, радиопа телевидени передачисене те вырăслах итлеме-курма тивсен, хамăр чĕлхене епле-ха чăнласах аталантарма пултарăпăр? Эппин, чы-

чăрмантарнă. Пĕлӳ никĕсĕ пуçламăш классенче хыванать-çке. Унта вара ачасем ашшĕ-амăш чĕлхипе каласа панине кăна ăнланаççĕ. Тепĕр енчен, паллах, вырăс чĕлхине те вĕсене пĕрремĕш класрах вĕрентме тытăнмалла. Алла илсе çитсен вара пур предмета вырăсла вĕрентмешкĕн тытăнма юрать. Çаплах ĕçлетчĕç ĕлĕкрех шкулсем... Енчен капла та пĕр-пĕр çамрăк таран пĕлӳ илеймесен? Ку ĕнтĕ ачи услап иккенне кăна пĕлтерет. Анчах теприсене çак ансат япалана нипле те ăнлантарма çук. Халлĕхе вара... республикăри чăвашсем хушшинче, вырăссемпе танлаштарсан, аслă пĕлӳллĕ çынсем икĕ хут сахалрах. Çакăн патне илсе çитерчĕ пире атте-анне чĕлхине хисепе хуманни.

Кирлĕ вăл, тăван чĕлхемĕр, питех те кирлĕ! Шкулта та, патшалăх учрежденийĕсенче те кирлĕ. Автономиллĕ республика унсăрăн епле-ха патшалăх евĕр тытăм пултăр?

«Ытти халăхсене хĕсни пулать» тени тата? Атьăр-ха, çапла калакансене хуравлас вырăнне эпир çак ыйтăва тепĕр май çавăрса хурар. Чăваш чĕлхине ним вырăнне хуманни республика тĕп халăхне хĕсни мар-и? Эпир ăна тĕнчери пĕртен-пĕр вырăнта тăван чĕлхепе калаçма памастпăр! Çакна ăнлама килĕшменнисем е хăйсене ĕç хушăнасран (тен, чăвашла вĕренме тивĕ?) хăраççĕ, е, чăннине тӳртен каласан, (ăнланмасăр-и е ăнлансах) великодержавлă шовинист евĕр шухăшлаççĕ.

ЧĂВАШ чĕлхине патшалăх чĕлхи тума килĕшменнисем пĕтĕм общественность çапла шухăшлать теме пăхаççĕ. Çакна КПСС обкомĕн идеологи пайĕ ирттернĕ социологи тĕпчевĕ çирĕплетсе парать имĕш. Идеологи пайĕ республика хаçачĕсенче анкета пичетлесе кăларнăччĕ. Çав анкетăна 1100 яхăн çын çырса янă. Анчăх хаçатри ыйтусене чи активлă çынсем кăна хуравлана-çке. Эппин, пĕтĕм халăх çапла шухăшлать теме юрать-ши? Çапах та тĕпчев мĕн кăтартнине пăхса тухар. Чăваш чĕлхине патшалăх шайне çитермешкĕн респондентсен 44 проценчĕ кăна килĕшет иккен, 49 проценчĕ вара — хирĕç. Пĕр шухăшласан, кунтан нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Республикăра 40 процента яхăн чăваш мар халăх пурăнать. Тĕпчев вĕсен 80 проценчĕ ытла чăваш чĕлхине патшалăх чĕлхи тума килĕшменнине кăтартать. Ахăртнех, урехла пулма та пултараймăн. Тата кашни вуна чăвашран пĕри тăван чĕлхене йышăнманнине асра илер. Эппин, калăпăр, паян республикăра референдум ирттерес-тĕк, халăхăн ытларах пайĕ чăваш чĕлхине хирĕç пулма та пултарать. Анчах халăхăн ытларахăшĕ йăнăшнă тĕслĕх пулмĕ-ши ку? Тата ку ыйтăва республикăсем хăйсем татса паччăр тесе КПСС Платформинче тĕрĕс каланă-ши? Сăмахран, Карел, Коми, Бурят, Якут, Мордва АССРĕсене илсен, вĕсенче ку ыйтупа тăван чĕлхене хирĕç сасăласси тӳрех паллă, мĕншĕн тесĕн çав республикăсенче тĕп халăхсем 10—22 про-

нăй Комитечĕн Пленумĕнче ӳлĕм вырăс чĕлхи пĕтĕм патшалăх чĕлхи пулма пултарасси çинчен каланă. Чăннипе вăл тахçанах ĕнтĕ çак шайра. Эппин, республикăсем пĕр-пĕринпе тата центрпа унчченхи пекех çăмăллăн çыхăнса пурăнĕç.

Чăваш чĕлхи патшалăх чĕлхи пулма вăй çитерейĕмĕ текенсемпе вара тавлашма та вăй мар. Пĕтĕм тĕнче литературин шедеврĕсене ним мар куçарма май паракан чĕлхене епле-ха çапла хаклама именмеççĕ?

Шухăшлама пĕлекен кашни çын çакна лайăх ăнланать: наци чĕлхине харпăр хăй республикинче патшалăх чĕлхи туса хумасан, вăл пĕтетех.

Пур халăха интеллект тата культура тĕлĕшпе аталанмашкăн пĕр пек майсем туса парсан та, паллах, анкри ӳлĕмре вĕсенчен хăшĕ-пĕри пурĕпĕр çухалĕ. Анчах ку вăл ют алă вĕлерни мар, харпăр хăй алăпе тунă шăпа пулĕ. Унччен вара тупăшар-ха. Кам пĕлет, тен, çав тупăшура ытла йышлăх маррисемех малта пулĕç...

ЮРАТЬ, чăваш чĕлхине патшалăх чĕлхи туса хутăмăр, текĕпĕр. Ун хыççăн вăл упранса малалла аталанасса, унпа пĕрле культура та çĕкленессе, халăхăн чылай ырă йăли-йĕрки каялла таврăнасса шанма пулĕ-ши? Темле çав. Наци хăйне уйрăм тĕнчере пурăнмасть. Таврари улшăнусем ăна хăш енчен те пулин пырса витерĕççĕх.

Атьăр-ха, шухăшласа пăхар: пур халăхсене те аталанма пĕр пек майсем туса памалла тени мĕне пĕлтерет? Кашни республиканах промышленность, хулара тата ялта пурăнакансем еене пĕр шая çитересcине-и? Халиччен ку ыйтăва шăпах çапла ăнланнă та эпир. Анчах çак çул тĕрĕс-ши? Ман шутпа, промышленность вăйлă аталаннă çĕршывсене, республикăсене, регионсене — малтисен шутне, ыттисене вара кайрисем шутне кĕртни ку чухне тĕрĕсех мар. Калăпăр, ялхуçалăхĕ ытларах аталаннă пулсан? Вăл, мĕн, ытла шухăшламасăр ĕçлеме май парать-им? Тĕрĕссипе, паян шăпах ялхуçалăхĕ (ăна апат-çимĕç индустрийĕпе тата çăмăл промышленноçпа пĕрле илсен) аталану шайне тĕп-тĕрĕс кăтартса парать пулĕ. Енчен чăваш ĕлĕк-авалтан çĕр ĕçлесе тата выльăх-чĕрлĕх пăхса пурăннă-тăк, республикăра ал çемми япаласенех аталантармалла пулнă. Çĕрулми е хăмла ытларах ӳстерни, калăпăр, япăхчĕ-им? Вĕсене чĕртавар халлĕн таçта ăсатас вырăнне вырăнтах тĕрлĕ çимĕç-япала хатĕрлесен тата? Анчах çук ĕнтĕ, анăçлă культурăсене те ытларах туса илеймĕпĕр, мĕншĕн тесен, «малта пыракансем» хыççăн кайса, пирĕн республика та кĕçех ял халăхне вуçех çухатса пĕтерĕ... Чăн та, ку вăл пире промышленность пачах кирлĕ маррине пĕлтермест. Çапах мĕн тума кирлĕ-ха пире трактор тăвакан «улăп»? Е «Химпром» пĕрлешӳ? Вĕсем валли республикăра чĕртавар шăрши-марши те çук-çке... Çакнашкал ютăш предприятисем туса лартни чи пирвай наципе çапса хуçма пулăшать. Ара,

Эппин, республика тулашĕнчи чăвашсен мĕнле пурăнмалла-ха? Платформăра кунашкал ыйтусене татас тĕлĕшпе хăшпĕр майсем палăртнă. Калăпăр, малашне автономиллĕ районсемпе Советсем йĕркелеме пултараççĕ. Анчах вĕсем наци культурине хăйсем тĕллĕн аталантарайĕç-ши? Çав районсемпе Советсем кĕрекен республикăсем, крайсемпе облаçсем вĕсене ку тĕлĕшпе питех пулăшаймĕç. Тем тери пулăшас тесен те.

Çакна май манăн хăй вăхăтĕнче тиркесе тăкнă наци культурин автономине аса илес килет. Капитализм условийĕсенче наци культурин автономийĕ сиенлĕ те пулма пултарнă, ма тесессĕн вăл наци хире-хирĕç классене пайланнине шута хуман. Анчах социализмлă революци хыççăн эксплуататорсене пĕтернĕ-çке... Чăн та, пурнăçа таран ăнланнă-скер, Ленин каярах хăех çак теорин хăшпĕр шухăшĕсене шута хума тытăннă. Çавăнпах ĕнтĕ Мускавра, Хусанта, Етхӳре, Самарта чăваш хаçачĕсемпе кĕнекисем тухма пуçланă. Шел, çакнашкал политикăна саккун йĕркипе çирĕплетсе хăварайман. Пурăна-киле ăна хĕссе-хĕссе пынă та юлашкинчен наци культурине республика чиккипе пăркăчласа лартнă.

НАЦИ культурин автономипе ку чухне еплерех йĕркелесе яма пулать-ха?

Çавнашкал автономисене, ахăртнех, пĕр нацин союзлă е автономиллĕ республики, автономиллĕ облаçĕсем, районĕсем тата Советĕсем кĕмелле. Облаçсемпе районсем тата Советсем администраци тĕлĕшпе хăйсен республикисене, крайĕсене е облаçĕсенех пăхăнса тăччăр. Çав вăхăтрах, хуçалăх расчетне ĕçе кĕртсе, çутĕçпе культурăна аталантарма каякан укçа-тенкĕпе хăйсем пĕлнĕ пек усă курччăр. Шкулта мĕнле чĕлхепе вĕрентесси, хăйсен стипендиачĕсене ăçта вĕренме ярасси, хăш институтсемпе университетсенчен кадрсем йышăнасси, мĕнле театрсемпе ансамбльсене гастроле чĕнесси — пĕтĕмпех вĕсен хăйсен ĕçĕ пулмалла. Çавăнпа пĕрлех вĕсене наци чĕлхипе тухса тăракан хаçат-журнал çырăнма, кĕнеке туянма никам ăн чăрмантартăр. Наци радиопа телевидени передачисем те çитчĕр вĕсем патне.

Паллах, ку ĕçре наци республикин ашшĕ килĕ вырăнĕнче пулмалла. Анчах вăл хăйĕн «ачисем» ыйтнине пур енĕпе те тивĕçтермешкĕн вăй çитерейĕ-ши? Ĕç-пуç хальхи пекех пырсан, автономиллĕ республика, паллах, çитерейме. Пĕртанлăх çинчен калаçасса тĕрĕсех калаçатпăр та-ха, наци культурин, искусствин, çутĕçĕн ыйтăвĕсене, тĕпрен илсен, çав-çавах центрта кăна татса параççĕ. Мускав хаçачĕсемпе журналĕсем, радиопа телевиденийĕ çав-çавах автономиллĕ республикăсем çинчен нимĕн те каламаççĕ, вĕсем çут тĕнчере çук та тейĕн. Центрти издательствăсем «вак халăх» çыравçисен кĕнекисене çав-çавах питĕ сахал кăлараççĕ. Тĕрлĕ ведомствăсем, хут çук, техника хатĕрĕсем çитмеççĕ, укçа сахал текелесе, çав-çавах автономиллĕ республикăсене наци культурине çителĕклĕ аталантарма памаççĕ... Союзлă тата автономиллĕ республикăсен прависене танлаштарма-

УРĂХ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Ĕçсĕррисен йышĕ ӳсет

ПЕКИН. (ТАСС). Пĕлтĕр Китайра ĕçсĕр пурăнакансен йышĕ ӳснине палăртнă: ĕçлеме пултаракан пĕтĕм халăхăн 2,3 проценчĕ валли ĕç тупăнман. Çакăн çинчен Китай Халăх Республикин Государство статистика управленийĕн представителĕ пĕлтернĕ. Китайри халăх йышĕ 1,1 миллиард çынна çитнĕ. Çуллен 10 миллион çынна яхăн (вĕсенчен ытларахăшĕ — шкултан вĕренсе тухакансем) ĕç шыракансен ретне тăраççĕ.

Государство ĕçсĕррисен йышне чакарма мерăсем йышăнать, анчах нимех те тăваймасть. Çĕршывра уйрăм çын предприятийĕсемпе коллективсен предприятийĕсене уçма ытларах тăрăшаççĕ.

Грегор Гизи пĕлтерни

БЕРЛИН, январĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Хальхи вăхăтра СЕПГ—ПДС членĕсенчен кашнинех мĕн тери йывăр пулнине эпир пĕлетпĕр, нумайăшĕ, уйрăмах оппозицие куçас шухăшпа килĕшменнисем, пирĕнтен уйрăлассине ăнланатпăр, тенĕ СЕПГ—ПДС председателĕ Грегор Гизи. Вăл «Нойес Дойчланд» хаçат представителĕпе калаçнă. Çывăх вăхăтрах парти статусне улăштарма палăртнă май, партире структурăллă улшăнусем тумалла. Çак ĕç çĕнетӳ процесне аталантарма пулăшĕ.

Кунта парти шăпи çинчен мар, чи малтанах çĕршыв шăпи çинчен сăмах пырать. Оппозицири хăшпĕр вăйсем Германин икĕ государствине тапхăрăн-тапхăрăн пĕрлештермелли плана пурнăçа кĕртме сĕнеççĕ, тенĕ Г. Гизи. Çав плана пурнăçа кĕртни Демократиллĕ Германи Республики пĕтсе ларнине пĕлтернĕ пулĕччĕ, Европăри лару-тăрушăн хăрушлăх кăларса тăратнă пулĕччĕ.

Президента тапăнасшăн

ВАШИНГТОН, январĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). СШАн вăрттăн служби наркокартельсем Джордж Буш президента тапăнма хатĕрленни çинчен пĕлтернине тĕпчет. Президента вăл наркотиксене хирĕç кĕрешес ыйтупа Колумбире государство пуçлăхĕсемпе тĕл пулнă вăхăтра тапăнасшăн. Разведка пĕлтернĕ тăрăх, президентăн ВВС-1 самолетне вăл Картахенра анса ларнă чухне персе ӳкерме Колумбие СА-7 ракетăсем вăрттăн ăсатма пуçланă. Тĕлпулу Колумби столицинче февралĕн 15-мĕшĕнче иртмелле.

Афганистанри лару-тăру

КАБУЛ, январĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Афганистан столицинче Йăхсен аслă джиргин ларăвне ирттернĕ. Джирга членĕсем Наджибулла президент Кабулра çĕршыври мĕнпур политикăлла вăйсене хутшăнтарса пысăк совет туса хума сĕннине ырланă. Çакна палăртнă: пĕтĕм наци органĕ Афганистан ыйтăвне мирлĕ майпа татса памалли çул уçма пултарать.

Оппозици вăйĕсем, Пакистанăн çар çыннисем тата Саудовски Аравирен тара кĕрешнĕ çынсем иртнĕ тăватă кун хушшинче Хост хули çывăхĕнче Афганистан çарĕн позицийĕсене тапăнма хăтланнă. Çакăн çинчен Бахтар агентстви пĕлтерет. Анчах тăшмансен ĕç тухман. Джелалабадпа Кандагар çывăхĕнче çапăçусем малалла пынă. 250 ытла экстремист вилнĕ тата аманнă. Тăшманăн боеприпассем тиенĕ тăватă автомашини, пилĕк орудийĕ, темиçе ракета установки, ытти тĕрлĕ хĕçпăшал пĕтнĕ.

Кабула тапăнма пултарассине сирсе ярас тĕллевпе столица гарнизонĕн подразделенийĕсем хула тавра виçĕ талăк хушши тасату ирттернĕ. Вĕсем 100 яхăн пăлхавçăна стройран кăларнă, «Çĕр-Çĕр» класлă 20 ракета тата танксене пĕтерекен «Милан» ракетăсен снарячĕсене тытса илнĕ.

Депутатсемпе тĕл пулнă

ЛОНДОН. (ТАСС). Маргарет Тэтчер премьер-министр Европăри парламентăн консервативлă партирен суйланă депутачĕсен ушкăнĕпе тĕл пулнă. Тĕлпулура Британи правительстви Европăри Экономика Пĕрлĕхĕнче ирттермелли интеграци процесĕсем пирки мĕнле позици йышăнни çинчен ыйту сӳтсе явнă. Ку позицие ЕЭС членĕнче тăракан çĕршывсем питĕ кăмăлсар, мĕншĕн тесен официаллă Лондон «Пĕрлехи рынока» кĕрекен çĕршывсенчен ытларахăшĕ 1992 çулта Европăри пĕрлехи валюта системине туса хурасси çинчен палăртнине ырласах каймасть. М. Тэтчер премьер-министр Великобританин ЕЭСри ытти партнерĕсем умне пĕрлехи валюта механизмне кĕриччен пурнăçламалли чылай условисене кăларса тăратнă. Консервативлă кабинетăн çакăн пек позицийĕ Британи депутачĕсене Европарламентра пĕччен тăратса хăварасси патне илсе çитернĕ. Хальхи тĕлпулура депутатсем М. Тэтчера çак факт çинчен пĕлтересшĕн пулнă.

Забастовка пырать

ДЕЛИ. (ТАСС). Инди столицинче кĕçнерникун иртĕнпех [illegible] тăрать. Вырăнти ха-

Уйăха яхăн ĕнтĕ Делире чи паллă хаçатсенчен пĕри — «Индиан экспресс» хаçат тух- [illegible] Унта ĕçлекен журна-

Япони

ТОКИО. Апрелĕн 1-мĕшĕнче пуçланакан каçалхи финанс çулĕнче Япони правительстви ытти государствăсемпе тĕнчери организацисен аталанăвĕ валли уйăракан официаллă пулăшу 1,45 триллион иенăна çитет. Японири министрсен кабинечĕн ытларикун пулса иртнĕ ятарлă ларăвĕнче ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Таро Накаяма пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, çак пулăшу калăпăшĕ 5,8 процент чухлĕ ӳсет. Япони виççĕмĕш çул ĕнтĕ тăкаксен çак статйи тăрăх Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен малта пырать.

Тосики Кайфу премьер-министр, ларура тухса калаçнă май, Хĕвеланăç Европăри çĕршывсене демократилле улшăнусем тумашкăн практикăлла пулăшу пама кирлине палăртнă. «Японин тĕнчере çĕн йĕрке туса хумашкăн активлăрах хутшăнмалла», — палăртнă премьер-министр.

США

НЬЮ-ЙОРК. СШАн Аэронавтикăпа тĕнче уçлăхĕнчи тĕпчевсен наци управленийĕ (НАСА) астронавтсем хатĕрлемешкĕн 23 çынран тăракан çĕнĕ ушкăн йĕркеленĕ. Америкăн космос программин историйĕнче пĕрремĕш хут унта хĕрарăм-пилота — США сывлăш çар вăйĕсен майорне Эйлин Коллинза, Калифорни штачĕн Эдвардс авиабазинчи сăнавçă-летчиксен шкулĕн курсантне, кĕртнĕ. «Шаттл» карап çинче вĕçме хатĕрленнĕ хыççăн вăл, ушкăнри ытти коллегисем пекех, иккĕмĕш пилот вырăнне йышăнма, вăхăт иртнĕ май вара космос карапĕн экипажĕн командирĕ пулма та пултарать.

Çĕнĕ отряда пĕтĕмпе 16 астронавт-специалиста тата çиччĕ астронавт-пилота кĕртнĕ. Халлĕхе кам мĕнле специалист пуласси паллă мар-ха. 1991 çулăн çуррийче кăна вĕсем астронавт пулса тăраççĕ. Çак ушкăна йĕркеленине НАСА пилот тытса пыракан вĕçевсем валли астронавтсене малашне претендентсенчен суйласа илес ĕçе тытăнни вырăнне хурать. Çĕнĕ ушкăнсене икĕ çула пыракан циклпа вĕрентеççĕ.

Англи

ЛОНДОН. Юнашар карăнтарнă, пĕр-пĕринпе питĕ çирĕп хăюсемпе çыхăнтарнă 10—15 метр тăршшĕ хурçă вĕрен преступниксем ларса пыракан автомашинăна тытса чарма май парĕ. Çак «сĕрекене» çул урлă сарса хураççĕ те икĕ енчен шанчăклăн çаклатаççĕ. Тытса чармалли машина çак вырăна çитнĕ чухне хурçă вĕренсенчен пĕри çӳлелле çĕкленет, çул çинче вара хăйне евĕр «стена» пулса тăрать. «Сĕрекене» лекнĕ автомашинăри пассажирсем хăйсем тĕллĕн тухма пултараймаççĕ. Машинăсене тытса чармалли çĕнĕ хатĕр сехетре 100 километр хăвăртлăхпа пыракан транспорта та «тыткăнлама» пултарать. Халĕ ăна Британи çул-йĕр полицийĕ сăнаса пăхать.

Итали

славян чĕлхисем). Унашкал аталану-хавăшу хумĕсен вĕçĕ-хĕрри çук. Хальхи вăхăтра, калăпăр, акăлчан е испан чĕлхисем Çурçĕр Америка е Латинла Америка диалекчĕсене пайланаççĕ. Кам пĕлет, тен, вĕсенчен уйрăм чĕлхесем пулса кайĕç. Çак пулăм, тĕпрен илсен, ку е вăл халăх аталанăвĕпе, унăн ăс-хакăлĕ, культури ÿсниипе е чакниипе, çавна май вăл ыттисене витĕм кÿнипе тытăнниипе е пăрахниипе çыхăнна.

ЭППИН, чĕлхе пĕтĕт-тĕк, халăхĕ хăй те çут тĕнчере ĕмĕр-ĕмĕр пурăнма пултараймасть. Тĕрĕссипе, шăпах ĕнтĕ вăл хăй малтан пĕтет, унпа пĕрле чĕлхе те манăçа тухать. Çак пулăма тепĕр чухне халăх ячĕ юлни те чараймасть. Акă, VII ĕмĕрте пирĕн авалхи несĕлсен — Атăлçи пăлхарсен пĕр пайĕ Дунай тăрăхне куçса кайпа, вырăнти славянсене пăхăнтарса, Пăлхар патшалăхĕ туса хунă. Анчах халăх ячĕ кăна тăрса юлнă çав патшалăхра. Чăннипе пăлхарсем, вырăнти халăхпа пăтрашса-пĕрлешсе, хăйсем славянсем пулса тăнă.

Сăмах май, çакă вĕсене нимĕнле сиен те кÿмен. Эппин, «вырăса тухассинчен» хăрамах та кирлĕ мар-тăр. Эхер çак куçăм хăй юххипе пырать, чăн сăлтавсемпе никĕсленет пулсан? Анчах эпир чăн сăлтавсене пула кăна вырăсланатпăр-ши е пире вăйпа та тĕксĕ пынă?

XVI ĔМĔР вăррииче пурнăç хĕссе çитерниипе пирĕн халăхăмăрăн пысăк пайĕ Раççей кĕнĕ. Вăл вăхăт тĕлне чăвашăн çырулăхĕ çуралнă, хăйĕн патшалăхĕ пулман. Халăхăн пĕр пайĕ Хусан ханлăхне тарук тусах тÿрремĕн кĕнĕ, ытти чăвашсем те ăнах пăхăнса пурăннă. Наци аталанăвĕ пирки сăмах та пулма пултарайман...

Ирĕксĕрех шкулти истори урокĕсем аса килеççĕ. «Вырăс мар халăхсене пĕр хĕрхенмесĕр пусмăрланă», «вăйпах вырăса кăларнă», «инородецсене аталанма паман», «ирĕксĕрлесе çĕнĕ тĕн йышăнтарнă...» Çапла калатчĕç пире патша правительстви çинчен.

Çакна çирĕплĕтекен тĕслĕхсем пачах пулман тĕмĕпĕр. Новокрещенски шкулсенчех, сăмахран, чăваш ачисене вырăсла вĕрентме тытăннă. Тепĕр енчĕн, наци кадрĕсем пачăх та çук чухне урăхла май килнĕ-ши? Анчах II Кĕтĕрне

ласси-пулмасси (истори шайĕпе илсен, паллах), эппин, унăн чĕлхине культури аталанăвĕн те тупăшуран килмелле. Ан тив, халăхсем пурте туслă пулччăр. Çав вăхăтрах кашнин хăйĕн наци йăли-йĕркине тупăшса аталантарттăр. Тен, хăшпĕр ыра енсем ыттисен кăмăлне кайĕç. Енчен те, калăпăр, çапла майпа латышсем пек культурăллă, атăлçи нимĕçсем пек пултаруллă, еврейсем пек интеллектлă, чăвашсем пек ĕççен, тутарсем пек пĕр-пĕрне пулăшакан, белоруссем пек чăтăмлă, вырăссем пек уçă кăмăллă халăх пулса тăрсан, япăх-им?

Çакна палăртса хăварар: унашкал тупăшмашкăн пурин те тан майсем пулмалла. Уйрăмах чĕлхе тĕлĕшпе. Мĕ тесессĕн чĕлхе вăл çынсене пĕр-пĕринпе хутшăнма, шухăшлама, халăх ăслăлăхне пухма май паракан чи тĕп хатĕр. Анчах ачасене мĕн пĕчĕкрен вырăсла вĕрентеççĕ пулсан, çынсен тĕрлĕ инстанцире вырăсла кăна калаçма, хаçат-журнал, тĕпрен илсен, вырăсла çеç вулама, радиопа телевидени передачисене те вырăслах итлеме-курма тивсен, хамăр чĕлхене епле-ха чăнласах аталантарма пултарăпăр? Эппин, чылай чăваш ашшĕ-амăш чĕлхине тиркеме тытăнниинчен мĕн тĕлĕнмелли...

ТАТА мĕн калаççĕ-ха чăваш чĕлхине патшалăх шайне çĕклеме килĕшменнисем? «Ку вăл ытти халăхсене хĕсни пулать», «çапла эпир ыттисенчен уйрăлса каятпăр», «чăваш чĕлхи патшалăх чĕлхи пулма вăй çитереймĕ», теççĕ вĕсем.

Çапла, паян чăваш чĕлхи кирлĕ мар теме пулать. Мĕншĕн тесен республика шайĕнчи пуçлăхсем те пирĕнпе чăвашла калаçасшăн мар. Çитменнине, чылай чухне вĕсем вырăсла пуплешнине итлетĕн те, намăссипе пит хĕрелет. Ара, хăшпĕр предложенисем тÿрех «Крокодила», «юри шухăшласа кăлараймăн» рубрикăна лекме тивĕç-иç...

Е теприсем халĕ те-ха ачасене шкулта мĕн пĕчĕкрен вырăсла вĕрентме хистеççĕ. Унсăрăн вĕсем кайран аслă шкула кĕреймеççĕ имĕш... Вĕрентрĕç-çке-ха, нумай çулсем вĕрентрĕç. Пурĕпĕр чăваш çамрăкĕсем институтсене сахал кĕрсе пычĕç. Мĕншĕн тесен шăпах ĕнтĕ ачаран вырăсла вĕренни вĕсене тарăн пĕлÿ илме

çын çырса янă. Анчах хаçатри ыйтусене чи активлă çынсем кăна хуравланă-çке. Эппин, пĕтĕм халăх çапла шухăшлать теме юрать-ши? Çапăх та тĕпчев мĕн кăтартнине пăхса тухар. Чăваш чĕлхине патшалăх шайне çитермешкĕн респондентсен 44 проценчĕ кăна килĕшет иккен, 49 проценчĕ вара — хирĕç. Пĕр шухăшласан, кунтăн нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Республикăра 40 процента яхăн чăваш мар халăх пурăнать. Тĕпчев вĕсен 80 проценчĕ ытла чăваш чĕлхине патшалăх чĕлхи тума килĕшменнине кăтартать. Ахăртнех, урăхла пулма та пултараймăн. Тата кашни вунă чăвашран пĕри тăван чĕлхене йышăнманнине аса илер. Эппин, калăпăр, паян республикăра референдум ирттерес-тĕк, халăхăн ытларах пайĕ чăваш чĕлхине хирĕç пулма та пултарать. Анчах халăхăн ытларахăшĕ йăнăшнă тĕслĕх пулмĕ-ши ку? Тата ку ыйтăва республикăсем хăйсем татса паччăр тесе КПСС Платформинче тĕрĕс каланă-ши? Сăмахран, Карел, Коми, Бурят, Якут, Мордва АССРĕсене илсен, вĕсенче ку ыйтупа тăван чĕлхене хирĕç сасăласси тÿрех паллă, мĕншĕн тесен çав республикăсенче тĕп халăхсем 12—32 процент кăна пурăнаççĕ.

ТАВАН чĕлхене патшалăх чĕлхи туса хуни, чăнах та, республикăра пурăнакан ытти халăх çыннисене нихăш енчен те хĕсмелле мар. Ку çеç-и, вĕсем те харпăр хăй чĕлхине, культурине аталантарма пултарччăр. Эхер наци районĕсем туса хурсан, вĕсенче хăйсен чĕлхисемпе усă курччăр. Унсăр пуçне, пысăк хуласенче туслăх çурчĕсем, тĕрлĕ халăхсен культура центрĕсем уçмалла т. ыт. те. Вырăс чĕлхи вара тĕрлĕ халăхсен хутшăну хатĕрĕ пулса юлтăр. Эппин, кăмăл туманнисем чăвашла вĕренмесен те пултараççĕ. Республика шайĕнчи тата чăваш районĕсенче ĕçлекен пуçлăхсемсĕр пуçне. Вĕсен вара, халăх шăпине татса пама тивĕç çынсен, чăваш чĕлхине, культурине, йăли-йĕркине пĕлмеллех.

Ыттисенчен уйрăлса каясси тесен, ку вăл шухăшласа кăларнă сăлтав кăна. Халĕ пĕтĕм тĕнчере тĕрлĕ культурăсем пĕр-пĕринпе хутшăнса, çывăхланса пыраççĕ. Чĕлхе ку ĕçре нимĕнле чăрмав та кÿмест. Тата КПСС Централь-

ра кайрисем шутне кĕртни ку чухне тĕрĕсех мар. Калăпăр, ялхуçалăхĕ ытларах аталанни пулсан? Вăл, мĕн, ытла шухăшламасăр ĕçлеме май парать-им? Тĕрĕссипе, паян шăпах ялхуçалăхĕ (ăна апат-çимĕç индустрийĕпе тата çăмăл промышленноçпа пĕрле илсен) аталану шайне тĕп-тĕрĕс кăтартса парать пулĕ. Енчен чăваш ĕлĕк-авалтан çĕр ĕçлесе тата выльăх-чĕрлĕх пăхса пурăннă-тăк, республикăра ал çемми япаласенех аталантармалла пулнă. Çĕрулми е хăмла ытларах ÿстерни, калăпăр, япăхчĕ-им? Вĕсене чĕртавар халлĕн тăсра ăсатас вырăнне вырăнтах тĕрлĕ çимĕç-япала хатĕрлесен тата? Анчах çук ĕнтĕ, ăнăçлă культурăсене те ытларах туса илеймĕпĕр, мĕншĕн тесен, «малта пыракансем» хыççăн кайса, пирĕн республика та кĕçех ял халăхне вуçех çухатса пĕтерĕ... Чăн та, ку вăл пире промышленность пачах кирлĕ маррине пĕлтермест. Çапах мĕн тума кирлĕ-ха пире трактор тăвакан «улăп»? Е «Химпром» пĕрлешÿ? Вĕсем валли республикăра чĕртавар шăрши-марши те çук-иç... Çакнашкал ютăш предприятисем туса лартни чи пирвай наци çапса хуçма пулăшать. Ара, çĕнĕ ĕçе çĕнĕ çынсем, çĕнĕ специалистсем кирлĕ. Вĕсем, вырăнта çуккипе, ытларах ютран килеççĕ. Паллах, чăваш сахал вĕсен хушшинче. Çав вăхăтрах тĕп халăх çыннисене оргнабор йĕркипе кашни çул пиншерĕн республика тулашне ăсатаççĕ... Урбанизаци те наци паллисене тутăх пек кăшласа пырать.

Хăй вăхăтĕнче автономи республикисемпе облаçĕсене хăпăл-хапăл, пуç тавра ытла çавăрттармасăр туса хунă пирки татса пама çав тери кăткăс ыйтусем паян кун та пумай. Вĕсенчен чи пысăккисем — чикĕ тата халăхăн ютра чăмăртанса пурăнакан ушкăнĕсен ыйтăвĕсем. Тепĕр чухне çавнашкал ушкăн пурăнакан çĕр «ют» та мар темелле. Сăмахран, хăй вăхăтĕнче Пушкăрта куçнă чăвашсем хăйсен çĕрĕсене сутăн илнĕ. Халĕ унта вĕсем 130 пине яхăн пурăнаççĕ. Тутарта — унтан та ытларах. Ульяновск, Куйбышев, Пенза, Оренбург, Саратов, Томск облаçĕсенче, Красноярск крайĕнче те пирĕн юнтăвансем вуншар пин. Чĕрĕ пĕве пайăн-пайăн кассан вăл сывă та тĕреклĕ пулассă шанма хĕн.

сен ĕçĕ пулмалла. Çавăнпа пĕрлех вĕсене наци чĕлхипе тухса тăракан хаçат-журнал çырăнма, кĕнеке туянма никам ан чăрмантартăр. Наци радиопа телевидени передачисем те çитчĕр вĕсем патне.

Паллах, ку ĕçре наци республикин ашшĕ килĕ вырăнĕнче пулмалла. Анчах вăл хăйĕн «ачисем» ыйтнине пур енĕпе те тивĕçтермешкĕн вăй çитерейĕ-ши? Ĕç-пуç хальхи пекех пырсан, автономиллĕ республика, паллах, çитереймĕ. Пĕртанлăх çинчен калаçасса тĕрĕсех калаçатпăр та-ха, наци культурин, искусствин, çутĕçĕн ыйтăвĕсене, тĕпрен илсен, çав-çавах центрта кăна татса параççĕ. Мускав хаçачĕсемпе журналĕсем, радиопа телевиденийĕ çав-çавах автономиллĕ республикăсем çинчен нимĕн те каламаççĕ, вĕсем çут тĕнчере çук та тейĕн. Центрти издательствăсем «вăк халăх» çыравçисен кĕнекисене çав-çавах питĕ сахал кăлараççĕ. Тĕрлĕ ведомствăсем, хут çук, техника хатĕрĕсем çитмеççĕ, укçа сахал текелесе, çав-çавах автономиллĕ республикăсене наци культурине çителĕклĕ аталантарма памаççĕ... Союзлă тата автономиллĕ республикăсен прависене танлаштармасан, кунашкал лару-тăру нихăçан та улшăнас çук. Ман шутпа, çак республикăсем хушшинче пĕр уйрăмлăх кăна пулмалла. Çав уйрăмлăх — автономиллĕ республика СССРтан хăй ирĕкĕпе тухма пултараймани.

Пĕртанлăх туса хурсан тата республика хуçалăх расчечĕ çине куçсан тин наци культурине аталантарас ыйтусем чăнласах татăлма тытăнĕç. Еплерех татăлĕç-ши вĕсем? Ку ĕнтĕ пĕтĕмпех республика, халăх мĕнле ĕçленинчен килĕ. Тухăçлă ĕçлетĕн, пысăк наци тупăшĕ тăватăн — тархасшăн, çĕнĕ хаçат е журнал, театр е оркестр уçма, паттăрсемпе паллă çыннисене асăнса палăк лартма пултаратăн. Енчен кĕсье çÿхерех-тĕк — тата лайăхрах ĕçлеме тивĕ. Анчах теприсем автономи хăйĕн культурине тытса тăраймĕ тесе хăратниипе манăн пĕртте килĕшес килмест. Эхер халăх ĕçлесе илнĕ тупăшăн ытларах пайĕ республикăрах юлас-тăк, тытса тăратех. Халăха хăйĕнчен ытлашши нимĕн те кирлĕ мар-çке.

Николай МАКСИМОВ.

са памалли çул уçма пултарать.

Оппозици вăйĕсем, Пакистанăн çар çыннисем тата Саудовски Аравирен тара кĕрешнĕ çынсем иртнĕ тăватă кун хушшинче Хост хули çывăхĕнче Афганистан çарĕн позицийĕсене тапăнма хăтланнă. Çакăн çинчен Бахтар агентстви пĕл-

Кабула тапăнма пултарассине сирсе ярас тĕллевпе столица гарнизонĕн подразделенийĕсем хула тавра виçĕ талăк хушши тасату ирттернĕ. Вĕсем 100 яхăн пăлхавçăна стройран кăларнă, «Çĕр-Çĕр» класлă 20 ракета тата танксене пĕтерекен «Милан» ракетăсен снарячĕсене тытса илнĕ.

Депутатсемпе тĕл пулнă

ЛОНДОН. (ТАСС). Маргарет Тэтчер премьер-министр Европăри парламентăн консервативлă партирен суйланă депутачĕсен ушкăнĕпе тĕл пулнă. Тĕлпулура Британи правительстви Европăри Экономика Пĕрлĕхĕнче ирттермелли интеграци процесĕсем пирки мĕнле позици йышăнни çинчен ыйту сÿтсе явнă. Ку позицийĕ ЕЭС членĕнче тăракан çĕршывсем питĕ кăмăлсăр, мĕншĕн тесен официаллă Лондон «Пĕрлехи рынока» кĕрекен çĕршывсенчен ытларахăшĕ 1992 çулта Европăри пĕрлехи валюта системине туса хурасси çинчен палăртнине ырласах каймасть. М. Тэтчер, премьер-министр Великобританин ЕЭСри ытти партнерĕсем умне пĕрлехи валюта механизмне кĕриччен пурнăçламалли чылай услови кăларса тăратнă. Консервативлă кабинетăн çакăн пек позицийĕ Британи депутачĕсене Европарламентра пĕччен тăратса хăварасси патне илсе çитернĕ. Хальхи тĕлпулура депутатсем М. Тэтчера çак факт çинчен пĕлтересшĕн пулнă.

Забастовка пырать

ДЕЛИ. (ТАСС). Инди столицинче кĕçнерникун иртенпех шăплăх тăрать. Вырăнти хаçатсене сутакан çамрăк ачасен сасси те илтĕнмест. Мĕнпур кăларăмсенче ĕçлекен журналистсем, сотрудниксем забастовка пуçланă. Вĕсем ĕç укçине ÿстерме, хаксем ÿснĕ май хушса тÿлеме, массăллă информаци органĕсенче ĕçлекенсен прависене пĕр пăрăнмасăр пурнăçлама ыйтаççĕ.

Уйăха яхăн ĕнтĕ Делире чи паллă хаçатсенчен пĕри — «Индиан экспресс» хаçат тухмасть. Унта ĕçлекен журналистсен требованийĕсене массăллă информаци хатĕрĕсен сотрудникĕсен профессиллĕ мĕнпур пĕрлешĕвĕсем ырланă, правительство ыйтăва тивĕçтерме шантарнă пулнă, анчах халĕ те ăна тĕплĕн пăхса тухайман.

Нормăна чакарнă

ГАВАНА, январĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Кубăн Министрсен совечĕн Ĕç тăвакан комитечĕ паян çăкăр тата çăмарта хакĕ ÿсни çинчен пĕлтернĕ. Çĕршывра çăкăр пĕçерме — çăнăх, кайăк-кĕшĕке тăрантарма апат çитмест. Урăх çĕршывсем, чи малтанах ССР Союзĕ, Кубăна хăйсем сутма тивĕçлĕ таварсене пĕр тикĕс парса тăраймаççĕ.

Тухса тăнă йывăрлăхсене çĕнтерме правительство урăх çĕршывсенчен продукци валютăпа туянма йышăннă. Провинцисенчен ытларахăшĕнче çăкăр карточкăпа сутмалли нормăна чакарнă.

пулассĕ паллă мар-ха. 1991 çулăн çуррине кăна вĕсем астронавт пулса тăраççĕ. Çак ушкăна йĕркеленине НАСА пилот тытса пыракан вĕçевсем валли астронавтсене малашне претендентсенчен суйласа илес ĕçе тытăнни вырăнне хурать. Çĕнĕ ушкăнсене икĕ çула пыракан циклпа вĕрентеççĕ.

Англи

ЛОНДОН. Юнашар карăнтарнă, пĕр-пĕрипе питĕ çывăх хăюсемпе çыхăнтарнă 10—15 метр тăршшĕ хурçă вĕрен преступниксем хăрса пыракан автомашинăна тытса чарма май парĕ. Çак «сĕрекене» çул урлă сарса хураççĕ те икĕ енчен шанчăклăн çаклатаççĕ. Тытса чармалли машина çак вырăна çитнĕ чухне хурçă вĕренсенчен пĕри çÿлелле çĕкленет, çул çинче вара хăйне евĕр «стена» пулса тăрать. «Сĕрекене» лекнĕ автомашинăри пассажирсем хăйсем тĕллĕн тухма пултараймаççĕ. Машинăсене тытса чармалли çĕнĕ хатĕр сехетре 100 километр хăвăртлăхпа пыракан транспорта та «тыткăнлама» пултарать. Халĕ ăна Британин çул-йĕр полицийĕ сăнаса пăхать.

Итали

РИМ. Эрмитажра упранакан «Мадонна Конестабиле» картинăпа Римри «Палаццо ди Венеция» наци музейĕнче кăтартаççĕ. Ку произведени Италин паллă живописецĕн тата архитекторĕн Рафаэлĕн чи малтанхи ĕçĕсенчен пĕри шутланать.

Картинăна кунта Флоренцирен илсе килнĕ. Унччен ăна Палаццо Питти музейĕнче кăтартнă пулнă. Çав вăхăтра Рафаэлĕн «Донна Велата» портречĕпе искусствăна юратакансем малтан Эрмитажра, унтан вара Мускаври А. С. Пушкин ячĕпе хисепленекен Изобразительнăй искусствăсен музейĕнче паллашма пултарнă.

Право ыйтăвĕсемпе

КÿКЕÇ. Районта профилактика кунĕ иртрĕ. Чăваш АССР Шалти ĕçсен министерствин тата районти шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем, судпа прокуратура работникĕсем, ВЛКСМ райкомĕн секретарĕсем, халăха вĕрентес ĕç пайĕн представителĕсем, райбольницăри врачсем, икĕ ушкăна пайланса, «За коммунизм» колхозпа «Приволжское» вĕренÿ хуçалăхĕнче пулчĕç, ял ĕçченĕсене, вĕренекенсене право йĕркине çирĕплетме палăртнă мерăсем çинчен каласа пачĕç, район территорийĕнче иртнĕ çулта тунă преступленисен сăлтавĕсене тишкерчĕç.

Ю. ЛИСТОПАД.

Ÿсĕм—туслăхра

«Чувашстрой» строительство пĕрлешĕвĕн тăваттăмĕш строительство трестĕн 46-мĕш управленине йĕркеленĕренпе 25 çул çитрĕ. Вăл — трестри чи пысăк ĕç коллективĕсенчен пĕри, 300 çын ытла ĕçлет унта.

Черек ĕмĕрте кашни отделочник пурнăçлакан ĕç калăпăшĕ виçĕ хута яхăн ÿснĕ. Сăмахран, малтан маляр сменăра 25 тăваткал метр лаптăк сăрланă пулсан, халĕ — 64 тăваткал метр, штукатур 4,9 вырăнне — 17 тăваткал метр. Çакă строительсен ĕçне механизациленинчен, вĕсем хăйсен тивĕçне чыслăн пурнăçланинчен, ăсталăх ÿсниничен килет.

Управлени ветеранĕсем ыра тĕслĕх кăтартаççĕ. Вĕсен ретĕнче — Р. Брусова, С. Кубеева, Н. Максимова, Н. Храмова плиточницăсем, А. Гаврилова, Р. Лисова, М. Михеева, А. Петухова малярсем, Л. Матвеева, А. Семенова, А. Елашкина кровельщицăсем. Çамрăксем те аслисенчен кая юласшăн мар, тăрăшса ĕçлеççĕ.

Ĕç коллективĕсем хушшинче ăмăртура малярсен Е. Ивановăпа З. Смирнова, штукатурсен О. Станкова бригадисем малта.

Коллектив иртнĕ çулхи заданине чыслăн пурнăçланă. Кăçал вара тăватă миллион та 900 пин тенкĕлĕх ĕç тумалла. Кунта ытларах пурăнмалли çурт-йĕр, культурăпа йăла объекчĕсем кĕреççĕ.

— Строительство материалĕсене пĕр тикĕс парса тămанни тата чылай чухне вĕсене тиесе пушатассине япăх йĕркеленни ĕçре пысăк чăрмавсем кÿреççĕ-ха, — теççĕ отделочниксем. Строительство объекчĕсем республикăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче вырнаçнине пула ĕç вăхăчĕ чылай çухалать.

А. ОСИПОВ.

● *Редакцие килнĕ çыру*

Пайщиксем айăплă-ши?

Елчĕк районĕнчи хуçалăх с промышленность таварĕсем сутакан магазинсене кĕрсен, эсир тĕлĕнмелле пĕлтерÿсем вулама пултаратăр. Сăмахран, холодильник çине «мясо — 20 кг.», телевизорсем çине «мясо — 30 кг.», стенкăсем çине «мясо — 100 кг.» пысăк саспаллисемпе, тĕрлĕ тĕспе çырса çапнă.

Сутăçсем çапла ăнлантарса параççĕ: çак таварсене туянас тесен, вĕсемшĕн çавăн чухлĕ аш-какай памалла иккен. Ял çыннисем кÿршĕ районти ялсенче те пулаççĕ, унта çак таварсемшĕн аш-какай памалла туман. Мĕншĕн Елчĕк районĕнчи райпора ĕçлекенсем çакăн пек «закон» кăлараççĕ?

Хатĕрлев кантурĕ пĕлтĕр халăхран аш-какай пухмалли плана çуррине те тултарман иккен, 500 тонна вырăнне 200 тонна ытларах кăна хатĕрленĕ. Çавăнпа вĕсем çакăн пек çăмăл меслет шыраса тупнă та.

Елчĕк районĕнчи колхозниксем выльăх нумай усраççĕ. Ытлашши выльăхсене пĕлтĕр колхоза е Тутăр республикинчен, Ульяновск облаçĕнчен килнĕ хуçалăх представителĕсене сутрĕç. Елчĕкри хатĕрлев кантурĕ çав вăхăтра выльăхсене йÿнĕ хакпа илесшĕн кĕтсе ыйтрĕ. Халĕ пирĕн, пайщиксен, холодильник, телевизор илес тесен, хĕл каçарма хăварнă сысна-сене; пăрусене е сăвакан ĕнесене памалла-ши?

Хатĕрлев кантурĕн пуçлăхĕсем хăй вăхăтĕнче пачах ĕçлеменшĕн халăх айăплă мар пулĕ.

П. ВАСИЛЬЕВ.
Елчĕк районĕ,
Лаш Таяпа ялĕ



Кени. Çак çĕршывăн çутçанталăка сыхлакан органĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Кенире 1970 çулта 18 пин пуç носорог пулнă, 1988 çулта 500 пуç çеç юлнă. Носорогсем пĕтсе пыни чи малтанах браконьерсемпе çыхăннă. Юлашки вăхăтра вĕсен йышĕ çав тери ÿссе кайнă. Носорогăн хаклă шăммишĕн çак çĕршыва сĕмĕллĕн пуйма хапсăнакансем тăстан та пухăнаççĕ. Вĕсем ку чухнехи чи çĕнĕ йышши техникăпа тата транспортпа усă кураççĕ.

Ÿкерчĕк çинче: Найроби çывăхĕнчи пĕр заповедникра.

Кейстон—ТАСС фотоÿкерчĕкĕ.

Культура хыпарĕсем

Юбилее хатĕрленсе

Чăваш АССРĕ 70 çул тултарнине паллă тума хатĕрленсе, республикăри культура учрежденийĕсем тĕрлĕрен мероприятисем ирттерме палăртнă. Апрель — май уйăхĕсенче театрсен чи лайăх спектаклĕсен вунăкунлăхĕ пулса иртет. Июньте чăваш художникĕсен произведенийĕсен выставкине йĕркелеççĕ. «Савнă çĕр — Чăваш çĕршывĕ» темăпа наукăпа практика конференцийĕ пулмалла. Куçса çӳрекен выставка йĕркелеççĕ. К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен литература музейĕнче ятарласа экспозици тăваççĕ. Агиткультбригадăсен, культурăпа кану паркĕсен, фольклор коллективĕсен, чăваш йăлисемпе уявĕсене ирттермелли сценарисен конкурсĕсене ирттерме йышăннă. Республика юбилейĕ ячĕпе кинофильмсемпе видеофильмсем кăтартма палăртнă. Культура учрежденийĕсем юбилей ячĕпе «Акатуй» ирттерме активлă хатĕрленеççĕ.

Çыхăнăва çирĕплетме

Кăçалхи мартра республикăри Культура министерстви творчество союзĕсемпе пĕрле Россия Федерацийĕнче чăвашсем нумай пурăнакан районсенчи культура работникĕсемпе тĕлпулу ирттерме палăртнă. Красноярск крайĕнчи, Куйбышев, Саратов, Ульяновск, Новосибирск, Тюмень облаçĕсенчи, Тутар, Пушкăрт, Мари республикисенчи 70 ытла районти культура пайĕсен заведующийĕсене тĕлпулăва чĕнсе йыхрав янă. Тĕлпулура чăвашсен йăх-хакăл ыйтăвĕсене тивĕçтерес, культура учрежденийĕсем хушшинче çыхăнăва вăйлатас ыйтăва сӳтсе явма палăртнă. Хăнасем творчество работникĕсемпе, обществăпа культура центрĕн членĕсемпе тĕл пулаççĕ.

Г. НИКИФОРОВ.

Куракансем патĕнче

Çак кунсенче Пукане театрĕн «Илемпи» ушкăнĕ Улатăр районĕнче гастрольте çӳрет. Артистсем ялсемпе район центрĕнче Юхма Мишши çырнă «Илемпи чăх чĕппи» юмаха чăвашла та, вырăсла та кăтартаççĕ. Пăрачкав районĕнче пурăнакан çамрăк куракансем те, çак спектакльпе паллашма пултараççĕ. Гастроль уйăх вĕçĕччен пырать.

Театрăн тепĕр ушкăнĕ хăйĕн гастрольне Тăвай районĕнче пуçларĕ.

Вăрмар, Куславкка районĕсене театрăн тепĕр чăваш ушкăнĕ тухса кайнă.

Театрăн вырăс ушкăнĕ

Никама та манман, нимĕн те манăçман

А. Пермяк поэт çырăвĕсем

Канашра Аслă Отечественнăй вăрçăра çапăçса пуç хунă чăваш поэчĕн Александр Иванович Пермякăн (Пермяковăн) арăмĕ — Мария Федоровна Кадыкова пурăнать. «Сар службине упăшкана Вăрмартан 1939 çулхи ноябрĕн 20-мĕшĕнче ăсатрăмăр. Римма хĕрĕм ашшĕнчен виçĕ çулта юлчĕ. Тепри вăл салтакра чухне — 1940 çулхи мартра çуралчĕ», — каласа парать Мария Федоровна. Упăшкинчен юлнă документсене, сăнӳкерчĕксене, çырусене, унăн хаçат-журналта пичетленнĕ произведенийĕсене типтерлĕ упрать.

Акă Житомир облаçĕнчен 1940 çулхи январĕн 6-мĕшĕнче янă çыру:

«Эпĕ санран виçĕ çыру илтĕм, — пĕлтерет А. Пермяк. — Юлашки декабрĕн 26-мĕшĕнче килчĕ. Эпир хула варринче пурăнатпăр... Пӳлĕмре — хĕрĕхĕн. Пурте Вăрмартан. Эсĕ паллаканнисенчен Табаков пур...».

Поэт хăйĕн автобиографийĕнче çапла çырнă: «Эпĕ 1913 çулхи августăн 30-мĕшĕнче Тăвай салинче вăтам хресчен çемьинче çуралнă. 1929 çулта Тăвайĕнче 8 класс пĕтертĕм. Шупашкарти педтехникума вĕренме кĕнĕ. Унтан 1932 çулта вĕренсе тухнă. «Пионер сасси» хаçатра ĕçленĕ. 1932 çулхи сентябрь—ноябрь уйăхĕсенче Ульяновскри М. Горький ячĕпе хисепленекен педагогика институтĕнче вĕреннĕ. 1937 çулхи сентябрĕн 8-мĕшĕччен Канаш районĕнчи Шакăлти тулли мар вăтам шкулта чăваш чĕлхипе литератури вĕрентрĕм. 1937 çулхи октябрĕн 3-мĕшĕнчен пуçласа Вăрмарти вăтам шкулта ĕçлетĕп. 1936 çулхи май уйăхĕнчен пуçласа Шупашкарти учительсен институтĕнче заочно вĕренетĕп...».

А. Пермяк Шакăлта ĕçленĕ вăхăтра, 1935 çулхи августра, çак ялта çуралса ӳснĕ Мария Федоровна Кадыковăна качча илнĕ. Вăл вăхăтра Марин çак районти Çăлпуç ялĕнче колхоз председателĕ пулнă.

1940 çулхи январĕн 12-мĕшĕнче çапла пĕлтерет:

«Мана хорпа ташă ансамблĕн руководителĕ турĕç. Паян юрăсем юрлаттаратăп. Ман кĕпекесене шăшисем ан вакламаччăр. Вĕсене лайăх майлаca хур...».

«Красная Чувашия» хаçатпа çыхăну тытатăп, — тесе çырать А. Пермяк 1940 çулхи февралĕн 5-мĕшĕнче...

çавах. Манăн чи çывăх юлташ — Енккасинче учитель пулнă А. Ф. Филиппов. Унпа хамăр пурнăç çинчен калаçатпăр. Юнашарах çыватпăр. Лайăх, лăпкă, пултаруллă ача вăл. Ун çинчен Вăрмар хаçатне çыртăм».

Ку çырăва 1940 çулхи апрелĕн 4-мĕшĕнче янă: «Спре пурне те салам. Сан пата çыру ĕпер янăччĕ. Паян каллех çырас терĕм, мĕншĕн тесен санран каллех çыру илеймерĕм. Паян илессе шанăччĕ. Эсĕ чирлесе кайнă пулĕ тесе кулянатăп. Ыран хурала 8 сухрăма каймалла. Манăн уйăра утă тата сĕлĕпе çанăх склачĕсем патĕнче тăма лекет. Хурала пула ытла асаплапатпăр. Кашни виçĕ кун хушшинче лекет. Эсĕ чиртен сывалма тăрăш... Сана асаплă кунсем лекрĕç. Вăрмартан тухса килни тĕлĕкри пек çеç. Кулянатăп. Сывă пулсан, киле пырсан, пĕр-пĕрне хисеплесе пурăнас шухăш пур. Хамăр ачасен телейĕшĕн...» Хăйĕн пĕр çырăвĕнче А. Пермяк арăмне Польшăра тухакан хаçатра пичетленнĕ статйисене ярса панă.

1940 çулхи июлĕн 15—16-мĕшĕсенче янă çырусем: «Паян-ыран тухса каяс пек тăратпăр. Анчах ăçта илсе каясине пĕлместпĕр. Çитес кунсенче ăçта «сил-тăман» тухни паллă пулĕ. Вара эсĕ те ан ăстине пĕлĕн... Эпир кунтан инçе каятпăр пулмалла. Анчах эсĕ ытла ан кулян. Телей пулсан, вăрçă хирĕнчен чĕрĕ тухса сан пата вĕçсе çитĕп-ха, хам ачамсене курăп... Эсĕ питех ан кулян. Вилме шутламастăп-ха».

«Вилмесен, киле пыма шутлатăп-ха, — тесе çырать А. Пермяк 1940 çулхи августăн 9-мĕшĕнче. — Иртнĕ кунсене...

ни çинчен çырса пĕлтермерĕ-ха. Эпĕ янă статьясене ан çухат...».

Октябрĕн 31-мĕшĕнче янă çырура А. Пермяк хăйне полк шкулне вĕренме куçарни, тепĕр уйăхран — отделени командирĕ туса хуни çинчен пĕлтерет.

Акă тата икĕ çыруран йĕркесем: «...Купти библиотекăран кĕнекесем илсе вулатăп. Чылай вуласа тухрăм. Украинла мĕн калănине ăнланакан пултăм. Теп, калаçма та хăнăхăп. Вĕсен вырăсла евĕрлех. Кăшт çеç уйрăм».

1941 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче Новгород-Волынск хулинчен çапла пĕлтерет: «40-мĕш çул пирĕншĕн телейлĕ пулмарĕ. 1941-мĕш мĕнле пулĕ ĕнтĕ. Телейлĕ пултăрччĕ. Купта хыпар пур: пире 5-мĕш числара пĕр уйăхлăха курса пухаççĕ. Вара киле яраççĕ. Теп, февралĕн 23-мĕшĕ тĕлне ярĕç. Эпĕ çырупа хам статьясене чиксе янăччĕ. Вĕсене илтĕн-и? Çырса яр...»

Февралĕн 25-мĕшĕнче хăй «Сунтал» журнал илни, унпа батарея салтакĕсем интересленни çинчен хавасланса пĕлтерет: «Хам качас пуласа тухрăм. Ман пата Тăвай хаçачĕ килсе тăрать. Паян унта тепĕр сăвă яратăп...»

Çырусенче «вăрçă», «пимĕç» сăмахсем час-часах курăнкалаççĕ. 1941 çулхи апрелĕн 20-мĕшĕнче янă çырура: «Çак сăва лăпкă ирттерсен аван. Анчах мĕнле пулĕ ĕнтĕ» тенĕ. Майăн 3-мĕшĕнче çак шухăша малалла аталантарнă: «Çапталăк» пасалмасан, таврăнăп-ха...»

Аслă Отечественнăй вăрçă пуçлансан, поэт тӳрех вут-çулăма лекет. Юлашки çырăвĕнче вăл 1941 çулхи августра çапла пĕлтерет:

«Фашист йыттисене сĕмĕретпĕр. Тăшмана пирĕн çĕре таптама, хуласемпе ялсене çунтарма памастпăр. Çĕнтерӳшĕн юлашки патрон пĕтиччен çапăçăп. Çĕнтерсен кăна эпир телейлĕ пурнăç тума пултарăпăр...»

1941 çулхи декабрьте Укра-

Пĕлес тенĕччĕ...

Асăрхăр: уйăх тĕттĕмленет

Эпĕ час-часах Уйăх тĕттĕмленни çинчен калаçнине илтетĕп. Анчах мĕнле пулса иртет-ха вăл?

П. ВАСИЛЬЕВ.
Сĕнтĕрвăрри районĕ.

Çапла, пĕлтĕр кăна Уйăх икĕ хутчен тĕттĕмленсе иртнĕччĕ. Кăçал çак пулăма февралĕн 9-мĕшĕнче курма пултаратпăр. Çав вăхăтра Уйăх, Çĕр тавра çаврăннă май, Çĕр мĕлкине лекет. Паллă ĕнтĕ, Уйăх хăй çутă кăларса тăмасть. Вăл Çĕр мĕлки, урлă каçнă чухне Хĕвел çути ун çине ӳкмест, çавна май Уйăх тĕттĕмленет.

Çанталăк пĕлĕтлĕ тăни чăрмантараймасан, çав каç Уйăх пĕтĕмпех тĕттĕмленнине сăнама май килĕ. Вăл Мускав вăхăчĕпе 20 сехет те 29,5 минутра тĕттĕмленме тытăнать. Çав вăхăтра Уйăх çаврашкин пĕр енĕ Çĕр мĕлкине кĕме пуçлать. 21 сехет те 20,2 минутра вăл пĕтĕмпех тĕттĕмленет. Анчах çакна ан манăр: Уйăх йăлтах тĕттĕмленнĕ вăхăтра та куçран пачах çухалмасть, вăл хĕрлĕ-хăмăртарах тĕслĕ пулать. Ку вăл Çĕр атмосфери витĕр тухнă чухне Хĕвел пайăркисен пĕр пайĕ хуçăлса Уйăх çине лекнинчен килет.

Çав каçах 22 сехет те 33,9 минутра Уйăх пĕтĕмĕшпех тĕттĕмленни иртме пуçлать, 23 сехет те 54,5 минутра вăл Çĕр мĕлкинчен тухса çитет.

Кантăк савăтра упрамалла

Çисе яман консервăна шăвăç банкăрах хăварма юрамасть, теççĕ. Тĕрĕс-и?

А. ГРИГОРЬЕВА.
Сĕнтĕрвăрри районĕ.

Тĕрĕс. Уçнă шăвăç банкăна сивĕ çĕрте те (холодильникре) упрама юрамасть. Ăна кирек мĕнле пулсан та кантăкран тунă савăта куçармалла.

Цинкланă тимĕр лайăхрах

Мана сахă интереслентерет: пӳрт тăррине мĕнле хĕç-тимĕр витсен лайăхрах — цинкланă тимĕрпе е хура тимĕрпе? Вĕсем хушшинче уйрăмлăх мĕнле?

Л. ПЕТРОВА.
Патăръел районĕ.
Патăръел ялĕ.

Ку ыйтупа пире И. Павлов инженер-строитель çакăн пек канаш пачĕ: çурт тăррине цинкланă хĕç тимĕр витсен лайăхрах. Мĕншĕн тесен хура тимĕре ик-виçĕ çултан сăрлас пулать, цинкланă хĕç тимĕре вара сăрлама кирлех мар. Чăтăмлăхĕ енчен илсен те цинкланă тимĕр ĕмĕрĕ вăрăмрах.

Фронтовик пулнă пулсан...

Иртнĕ вăрçă вăхăтĕнче мана салтака илсе кайрĕç. Эпĕ унта 9 уйăх магазин хураллана. Кайран киле ячĕç. Халĕ ватă ĕнтĕ. 6 ача ӳстерсе суратрăм, упăшка вилчĕ. Хальхи вăхăтра мана никам та пулăшмасть.

М. МАКАРОВА.
Канаш районĕ.
Чулкăмака ялĕ.

Сирĕн çырăва Канаш районĕнчи социаллă пулăшу пайне ярса патăмăр. Унтан çапла пĕлтерчĕç: хальхи вăхăтра эсир, чăнах та, пĕчченех пурăнатăр. Сирĕн виçĕ ывăлпа виçĕ хĕр çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсене саланса пĕтнĕ, икĕ ывăлĕпе пĕр хĕрĕ Канашра ĕçлесе пурăнаççĕ. Кил-çурт енчен сире ачасем пулăшаççĕ. Вутшанкă енчен аптрамастăр. Пĕр сурăхсăр пуçне ытти выльăх-чĕрлĕх çук — вĕсене хĕл каçарма çăмăл маррине хăварах шута илнĕ пулĕ. Сире 70 тенкĕ пенси параççĕ.

Хальхи вăхăтра сирĕн хăвăр фронтра пулни тата пĕр-пĕр наград илни çинчен калакан нимĕнле документ та çук, çавна май эсир вăрçă ветеранĕсене паракан çăмăллăхсемпе усă курма пултараймастăр. Çав правăсемпе усă курас тесен, çуралса ӳснĕ Тăвай районĕнчи çар ĕç комиссариатĕнчен е халĕ пурăнакан Канаш районĕнчи çар ĕç комиссариатĕнчен хăвăр вăрçăра пулни çинчен ĕнентерекен документ илсе районти социаллă пулăшу пайне памалла.

Мĕншĕн карталанса вĕçеççĕ?

Кĕркунне е суркунне эпĕ тăрнасем карталанса вĕçсе иртнине юратса пăхатăп. Питĕ илемлĕ курăнаççĕ вĕсем. Анчах мĕншĕн ытти кайăксем ун пек вĕçмеççĕ-ха?

С. ПАВЛОВ.
Тăвай районĕ.

Асăрханă пулĕ, ула куракçемпе кайăк кăвакалсем, шыв чăххисемпе чавкасем, çерçисемпе кăвакарчăнсем нихçан та карталанса вĕçмеççĕ. Карталанса вĕçекеннисем — шултра кайăксем: тăрнасемпе хуркайăксем. Çавăн пек карталанса вĕçме кам вĕрентнĕ-ха вĕсене? Тӳрех калăпăр — пурнăç.

Ученăйсем палăртнă тăрăх, пысăк кайăксем вĕçнĕ чухне вĕсен тавра сывлăш вăйлă хумханать. Çавна май, вĕсем умлăн-хыçлăн вĕçсе пыраççĕ пулсан, малта вĕçекен кайăкăн сывлăш хумĕ кайра вĕçеккеннине чăрмантарса пырать, каялла тĕкет. Енчен те вĕсем картлашка пек карталанса вĕçеççĕ пулсан, тăрнасемпе хур-кайăксем пĕр-пĕрне чăрмантармаççĕ.

Пирĕн ӳпке мĕнле ĕçлет?

Пирĕн ӳпке хăй витĕр сывлăш нумай кăларса тăрать тетпĕр. Уссе ситнĕ сывă çын ӳпкепе мĕн чухлĕ сывлать?

В. ИВАНОВА.
Патăръел районĕ.

Арçын лăпкă тăнă вăхăтра кашни минутра 16—20 хутчен сывласа илет. Вăл кашни хутĕнче хăй çине 500 миллилитр сывлăш йышăнма ĕлкĕрет. Хĕрарăм хăвăртрах — кашни минутра 16—24 хутчен сывлать. Анчах вăл сывлăша арçынтан сахалрах — 300—400 миллилитр кăна йышăнать.

Вăтамран илсен, ӳпке кашни минутра 8—10 литр сывлăш сывлать. Йывăр ĕсленĕ, сĕклене тата хăвăрт чупнă вăхăтра çын минутра 40—60 хутчен сывласа илет, çавна май унăн ӳпки сывласа илекен сывлăш калăпăшĕ те ӳсет. Çакăн çинчен «Здоровье» журналта çырса пĕлтернĕ.

Таракан пĕтерме

Магазинсенче таракан пĕтермелли мĕнле эмелсем туянмалла?

К. ВАСИЛЬЕВА.
Çĕрпӳ хули.

Хальхи вăхăтра хими промышленноçĕн предприятийĕсенче тĕрлĕрен препаратсем кăлараççĕ. Çав шутра таракан пĕтермелли «Боракс», «Неопин», «Неопинат», «Хлорак», «Фосфолан». Вĕсене пурне те çăнăх пек вĕтетсе (порошок евĕрлĕ) хатĕрленĕ. Шĕвĕ препаратсенчен «Хлораль», «Дипром» тата «Прима» (аэрозоль) туянма пулать.

Тепĕр чухне хулăн хутран (картонран) тунă коробкăсем тĕл пулатăн. Унăн тĕпĕпе ăшне çыпăçтарса лартмалли япалапа сĕрнĕ. Çав коробка ăшне таракан кĕрсе кайсан вăл унта çыпçăнса ларнипе каялла тухаймасть, вилет.

Паллах, хими таварĕсен магазинĕсенче çав препаратсенчен хăшне те пулин çутаççех. Çавăнпа та магазинта асăннă эмелсенчен хăшĕ пур, çавна туянма пултаратăр.

Авалхи укçа çинчен

Эпĕ 70 çулта. Мана мĕн пĕчĕкрен укçа хакĕсем тĕлĕнтереççĕ. Елĕкхи вăхăтра 1 пуса — виçĕ пус, 2 пуса — сичĕ пус, 3 пуса вунă пус тенĕ. Мĕнле тата ăстан пуçланса кайнă çав шут?

И. БЕЛОВ.
Сĕмĕрле районĕ.
Якуртушкăнь ялĕ.

Пĕрремĕш Микулай патша вăхăтĕнче (1825—1855 ç.ç.) пулнă вăл. 1839—1843 çулсенче укçа реформи пулса иртнĕ. Ун чухне ассигнаци реформи тунă — 1769 çултан пуçласа 1843 çулччен çӳренĕ хут укçана улăштарнă. 3 тенкĕ те 50 пус хут укçашăн, çав шутра пăхăр укçашăн та, 1 тенкĕлĕх кĕмĕл укçа панă. Çапла вара 1 пуслăх кĕмĕл укçана 3 пус çурăлăх пăхăр укçапа танлаштарнă. 2 пуслăх кĕмĕл — 7 пус пăхăр укçапа, 3 пуслăххи — 10 пуслăх пăхăрпа, 5 пуслăххи — 17 пуслăх пăхăрпа, 10 пуслăххи — 35 пуслăх пăхăрпа, 20 пуслăххи — 70 пуслăх пăхăр укçапа танлашнă. Ун çинчен пире республикăри краеведени музейĕн аслă наука сотрудникĕ В. Шляхина пĕлтерчĕ.

Материалсене П. БОРИСКИН хатĕрленĕ.

Спорт

Тĕслĕх кăтартас вырăнне

Вăрмар поселокĕнче ГТО комплексĕн хĕллехи енĕсемпе иртнĕ район чемпионатĕнче шкул ачисем ытларах пулчĕç. Киве Вăрмарти вăтам шкулта вĕренекен Валерий Алексеева Марина Михайлова, Ман

Виçĕ енлĕ кĕрешӳре

Çак кунсенче Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче, лента тĕртекен тата чăлхапа трикотаж фабрикисенче, «Рассвет» производство пĕрлешĕвĕнче ĕçлекенсем, пир-авăр техникумĕнче вĕренекенсем ГТО комплексĕн хĕллехи енĕсемпе ăмăртрĕç. Старта 15 командăри 179 физкультурник тухрĕ. Пуринчен те нумайрах очко пухса, пир-авăр тата çăмал

Уйрăм физкультурниксене илес пулсан, пир-авăр комбиначĕн профкомĕнче ĕçлекен Альбина Назарова чи лайăх результат кăтартрĕ. Вăл пăшал пемелли тирта 50 очко илме май пур çĕртен 44 очко пухрĕ. 3 километрлă дистанцие пĕлтĕрне 10 минут та 49 çеккунтра чупса тухрĕ, гимнастика упражненине те пуриччен лайăхрах пурнăçларĕ. Виçĕ енлĕ кĕрешӳре Назарова

Отрасльти обкомăн парисене хăйсен ушкăнĕсенче çавăн пекех пир-авăр комбиначĕн командисенчи Михаил Иванов, Альбина Игушкина, Владимир Шемякин, Надежда Бикбова, Владимир Васильев, лента тĕртекен фабрикăра ĕçлекен Герман Чернов тата чăлхапа трикотаж фабрикинчи Мария Матвеева бригадир çĕнсе илчĕç.

Шупашкарти Калинин районĕн команди халĕ январь вĕçĕнче ГТО комплексĕн нумай енĕпе иртерекен Чăваш АССР чемпионатне хутшăнма хатĕр семпе тӗл пулассӗ.

Г. НИКИФОРОВ.

Куракансем патӗнче

Ҫак кунсенче Пукане театрӗн «Илемпи» ушкӑнӗ Улатӑр районӗнче гастрольте ҫӳрет. Артистсем ялсемпе район центрӗнче Юхма Мишши ҫырнӑ «Итлемен чӑх чӗппи» юмаха чӑвашла та, вырӑсла та кӑтартаҫҫӗ. Пӑрачкав районӗнче пурӑнакан ҫамрӑк куракансем те ҫак спектакльпе паллашма пултараҫҫӗ. Гастроль уйӑх пӗтиччен пырать.

Театрӑн тепӗр ушкӑнӗ хӑйӗн гастрольне Тӑвай районӗнче пуҫларӗ.

Вӑрмар, Куславкка районӗсене театрӑн тепӗр чӑваш ушкӑнӗ тухса кайнӑ.

Театрӑн вырӑс ушкӑнӗ Дж. Барри юмахӗ тӑрӑх хатӗрленӗ «Питер Пэн» юмаха Ҫӗнӗ Шупашкарта тата Шупашкарта кӑтартать.

Г. КИРИЛЛОВ.

Палӑк лартма

Паллӑ ӗнтӗ, Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗн культура, наука, ҫутӗҫ енӗпе ӗҫлекен ятлӑ комиссийӗ ЮНЕСКО — хӑйӗн ятарлӑ XXV ларӑвӗнче Чӑваш АССР Писательсен союзӗн правленийӗн сӗнӗвне пӑхса тухса, чӑваш литературин никӗсне хывнӑ Константин Васильевич Иванов поэт ҫуралнӑранпа 100 ҫул ҫитнине Пӗтӗм тӗнчери паллӑ кунсен календарьне кӗртме йышӑннӑ.

Аслӑ поэтӑмӑр юбилейне чаплӑн палӑртма халӑхпа хатӗрленмелле. Ентӗ Шупашкарта «Нарспи» авторӗн палӑкне лартас ыйту татӑлчӗ. Константин Иванов кӗнекисем тата унӑн пурнӑҫӗпе пултарулӑхне сӑнлакан альбомсем тухмалла, юбилее хатӗрленес тата ирттерес ӗҫе Пӗтӗм Союзри комисси йӗркелесе пымалла.

Поэт юбилейне тивӗҫлӗ шайра ирттерме унӑн ентешӗсем те анлӑн хатӗрленеҫҫӗ. Вӗсем Слакпуҫ ялӗнче К. В. Иванов палӑкне лартма йышӑннӑ. Ӑна лартма укҫа-тенкӗ пухас тӗллевпе Пушкӑрт АССРӗнчи Пелепей хулинчи Агропромбанкӑн Знаменкӑри уйрӑмӗнче 000142316-мӗш счет уҫнӑ. Пархатарлӑ та сӑваплӑ ӗҫе хутшӑнма кӑмӑл тӑвакансем хӑйсен укҫине ҫав счетпа куҫарса пама пултараҫҫӗ. Счет адресне тепре вырӑсла пӗлтеретпӗр: 452030. Башкирская АССР, г. Белебей, Знаменское отделение Агропромбанка, счет 000142316.

А. ИВАНОВ.

марти вӑтам шкулта ӗҫлетӗп. 1936 ҫулхи май уйӑхӗнчен пуҫласа Шупашкарти учительсен институтӗнче заочно вӗренетӗп...».

А. Пермяк Шакӑлта ӗҫленӗ вӑхӑтра, 1935 ҫулхи августра, ҫак ялта ҫуралса ӳснӗ Мария Федоровна Калыковӑпа качча илнӗ. Вӑл вӑхӑтра Мария ҫак районти Ҫӑлпуҫ ялӗнче колхоз председателӗ пулнӑ.

1940 ҫулхи январӗн 12-мӗшӗнче ҫапла пӗлтерет:

«Мана хорпа ташӑ ансамблӗн руководителӗ турӗҫ. Паян юрӑсем юрлаттаратӑп. Ман кӗнекесене шӑшисем ан ваклаччӑр. Вӗсене лайӑх майласа хур...».

«Красная Чувашия» хаҫатпа ҫыхӑну тытатӑп, — тесе ҫырать А. Пермяк 1940 ҫулхи февралӗн 5-мӗшӗнче. — Унтан ман пата ҫыру янӑ, ӑна паян илтӗм. Ҫырма хушаҫҫӗ. Ҫыратӑп. Эсӗ хаҫатсене сӑпаса пыр-ха? Ман статья пулсан, кунта яр. Пирӗн пата Вӑрмарта тухакан «Хӗрлӗ ялав» хаҫат килсе тӑрать. Эпӗ «Красная Звезда» хаҫат ҫырӑнса илетӗп».

Февралӗн 16-мӗшӗнче ҫырнӑ йӗркесем: «Эсӗ февралӗн 8-мӗшӗнче янӑ ҫырӑвна паян илсе вуларӑм. Паян 5 ҫыру илтӗм. «Ҫамрӑк большевик» хаҫат редакцийӗнчен те ҫыраҫҫӗ.

Сивӗ ҫанталӑкра икӗ урана та тӑм илтертӗм...».

«...Вӑрмар хаҫачӗ валли статья ҫыратӑп, — тесе пӗлтерет мартӑн 6-мӗшӗнче. — Унта икӗ статья ҫапса кӑларнӑ. Пурнӑҫ

ҫырӑвӗнче А. Пермяк арӑмне Польшӑра тухакан хаҫатра пичетленнӗ статйисене ярса панӑ.

1940 ҫулхи июлӗн 15—16-мӗшӗсенче янӑ ҫырусем: «Паян-ыран тухса каяс пек тӑратпӑр. Анчах ӑҫта илсе каяссине пӗлместпӗр. Ҫитес кунсенче ӑҫта «сил-тӑман» тухни паллӑ пулӗ. Вара эсӗ те эп ӑстине пӗлӗн... Эпир кунтан инҫе кайтӑр пулмалла. Анчах эсӗ ытла ан кулян. Телей пулсан, вӑрҫӑ хирӗнчен чӗрӗ тухса сан пата вӗсе ҫитӗп-ха, хам ачамсене курӑп... Эсӗ пите ан кулян. Вилме шутламастӑп-ха».

«Вилмесен, киле пыма шутлатӑп-ха, — тесе ҫырать А. Пермяк 1940 ҫулхи августӑн 9-мӗшӗнче. — Иртнӗ кунсенче калама ҫук йывӑр пулчӗ. Пурне те тӳссе ирттерме лекрӗ. Июнӗн 19-мӗшӗнче тухса кайса августӑн 7-мӗшӗнче каялла килтӗмӗр. Паллах, йывӑрлӑхсене эпӗ нихӑҫан та манаймӑп...».

Тепӗр ҫырӑвне тата 20 кунтан янӑ: «25-мӗш числара сана хисеплесе-юратса пӗр сӑвӑ ҫырса янӑччӗ. Ӑна илтӗн-и? Ҫырса пӗлтер. Ман статьясем е сӑвӑсем хаҫатсенче тухсан, касса чиксе яр. Ман вӗсене вулас килет. Канаш районӗн хаҫатӗнче манӑн пысӑк сӑвва кӑларчӗҫ. Ун хыҫҫӑн тата сапман-ши? Малтанхин ячӗ «Манӑн лирика» ятлӑ. «Пӗр ярӑм» ятлӑ сӑвӑ ҫырса янӑччӗ. Ӑна те ҫапнӑ, те ҫапман? Ялаков юлташ ман сӑвӑ тетрадьне ил-

лассӗ. 1941 ҫулхи апрелӗн 20-мӗшӗнче янӑ ҫырура: «Ҫак ҫӑва лӑпкӑ иртерсен аван. Анчах мӗнле пулӗ ӗнтӗ» тенӗ. Майӑн 3-мӗшӗнче ҫак шухӑша малалла аталантарнӑ: «Ҫанталӑк» пӑсӑлмасан, таврӑнап-ха...»

Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ пуҫлансан, поэт тӳрех вут-ҫулама лекет. Юлашки ҫырӑвӗнче вӑл 1941 ҫулхи августра ҫапла пӗлтерет:

«Фашист йыттисене сӗмӗретпӗр. Тӑшмана пирӗн ҫӗре таптатма, хуласемпе ялсене ҫунтарма памастпӑр. Ҫӗнтерӳшӗн юлашки патрон пӗтиччен ҫапӑҫӑп. Ҫӗнтерсен кӑна эпир телейлӗ пурнӑҫ тума пултарӑпӑр...»

1941 ҫулхи декабрьте Украинӑри Житомир облаҫӗнчи Новгород-Волынск хули ҫывӑхӗнче 27 ҫулхи Александр Пермяк хыпарсӑр ҫухалнӑ. Анчах унӑн ячӗ ӗмӗр-ӗмӗр халӑх чӗринче. Ун сӑввисене пухса кӗнеке кӑларма тахҫанах вӑхӑт. Вӑл ӗҫленӗ Канаш районӗнчи Шакӑлти тата Вӑрмарти вӑтам шкулсенче асӑну хӑмисем ҫакасчӗ. Тӑвайӗнче те ӑна чысласа нимех те тумаҫҫӗ-ха. Мӗншӗн шкулта е музейра унӑн пурнӑҫӗпе пултарулӑхӗ ҫинчен калакан стендсем йӗркелес мар?

В. ПРОКОПЬЕВ,
СССР Журналистсен союзӗн членӗ.

Фотоӳкерчӗк ҫинче: А. И. Пермяков 1940 ҫулта.

ХАЛӐХСЕН ТУСЛӐХНЕ ХАЛАЛЛАНӐ

Литвари Талсы хулинче халӑхсен туслӑхне халалланӑ куҫса ҫӳрекен фотовыставка уҫӑлчӗ. Экспозицисенчен пӗри Чӑваш республикипе паллаштарать.

Выставкӑра хуласен ҫӗнӗ районӗсен макечӗсене, халӑх ӑстисен произведенийӗсене, ачасен ӳкерчӗкӗсене, Шупашкарпа Канашӑн, Улатӑрпа Ҫӗмӗрлен паянхи пурнӑҫне сӑнласа паракан сӑнӳкерчӗксене курма пулать. Чӑваш АССРӗ ҫӗршыври ытти республикӑсемпе политикӑпа экономика тата культура енӗпе мӗнле ҫыхӑну тытнипе те паллаштараҫҫӗ кунта вырӑн панӑ материалсем. Республикӑра тухса тӑракан хаҫат-журналсем, асӑну медалӗсене, театр афишисене уйрӑм пая вырнаҫтарнӑ.

В. ЛИЕЛЮК.

Арҫын лӑпкӑ тӑнӑ вӑхӑтра кашни минутра 16—20 хутчен сывласа илет. Вӑл кашни ху-

Анчах вӑл сывлӑша арҫынтан сахалрах — 300—400 миллилитр кӑна йышӑнать.

пӑшӑ те ӳсет. Ҫакӑн ҫинчен «Здоровье» журналта ҫырса пӗлтернӗ.

Материалсене П. БОРИСКИН хатӗрленӗ.

Спорт **Спорт**

Тӗслӗх кӑтартас вырӑнне

Вӑрмар поселокӗнче ГТО комплексӗн хӗллехи енӗсемпе ирттернӗ район чемпионатӗнче шкул ачисем ытларах пулчӗҫ. Кивӗ Вӑрмарти вӑтам шкулта вӗренекен Валерий Алексеевпа Марина Михайлова, Мӑнҫырмари Татьяна Архипова, Энтриялӗнчи Ирина Леонтьева, Экӗшпуҫӗнчи Андрей Григорьев, Кӗтеснерти Сергей Семенов спорт разрячӗн нормативӗсемпе танлашакан результатсем кӑтартрӗҫ. Районти спорткомитетӑн куҫса ҫӳрекен кубокӗсене Мӑнҫырмари вӑтам тата Пинерти тулли мар вӑтам шкулсен командисем ҫӗнсе илчӗҫ.

Ман шутпа, район чемпионачӗсенче ҫитӗннӗ спортсменсем чи малтан ырӑ тӗслӗх кӑтартмалла. Шел пулин те, Вӑрмар районӗнче вӗсен хастарлӑхӗ ҫултан-ҫул чакса пырать. Хальхи чемпионата, акӑ, «Чувашия», XXV партсъезд ячӗпе хисепленекен, «Россия» тата «Тегешевский» совхозсенчен пӗр физкультурник та хутшӑнмарӗ. Мӗн шутлаҫҫӗ-ши ҫакӑн пирки вырӑнти профком председателӗсемпе В. Павлов, Г. Иванов, Г. Усков тата Ю. Волков инструктор-методистсем?

Район центрӗнчи предприятисемпе учрежденисенче ӗҫлекенсем те ГТО комплексӗнчен писсе пыраҫҫӗ. ВЛКСМ райкомне, спорткомитетпа профсоюзсен ДФСО район советне ертсе пыракансен пуҫарулӑхпа тимлӗх ҫитейменнипе ӑнлантармалла пулӗ ҫакна.

Г. НИКОЛАЕВ,
ДОСААФ тата спорт ветеранӗ, обществӑлла корреспондент.

Висӗ енлӗ кӗрешӳре

Ҫак кунсенче Шупашкарти пир-авӑр комбинатӗнче, лента тӗртекен тата чӑлхапа трикотаж фабрикисенче, «Рассвет» производство пӗрлешӗвӗнче ӗҫлекенсем, пир-авӑр техникумӗнче вӗренекенсем ГТО комплексӗн хӗллехи енӗсемпе ӑмӑртрӗҫ. Старта 15 командӑри 179 физкультурник тухрӗ.

Пуринчен те нумайрах очко пухса, пир-авӑр тата ҫӑмӑл промышленноҫри рабочисен профсоюз обкомӗн асӑнмалӑх парнине комбинатӑн гобелен фабрикин команди ҫӗнсе илчӗ. Иккӗмӗш вырӑнта — чӑлхапа трикотаж фабрикин представителӗсем.

Уйрӑм физкультурниксене илес пулсан, пир-авӑр комбиначӗн профкомӗнче ӗҫлекен Альбина Назарова чи лайӑх результат кӑтартрӗ. Вӑл пӑшал пемелли тирта 50 очко илме май пур ҫӗртен 44 очко пухрӗ, 3 километрлӑ дистанцие йӗлтӗрпе 10 минут та 49 ҫеккунтра чупса тухрӗ, гимнастика упражненине те пуринчен лайӑхрах пурнӑҫларӗ. Висӗ енлӗ кӗрешӳре Назарова 150 очко пухрӗ. Ун хыҫҫӑн иккӗмӗш вырӑн йышӑннӑ Тамара Краснован — 138 очко. Ҫак результатсем СССР спорт мастерӗн кандидачӗн нормативне тивӗҫтереҫҫӗ.

Отрасльти обкомӑн парнисене хӑйсен ушкӑнӗсенче ҫавӑн пекех пир-авӑр комбиначӗн командисенчи Михаил Иванов, Альбина Игушкина, Владимир Шемякин, Надежда Быкова, Владимир Васильев, лента тӗртекен фабрикӑра ӗҫлекен Герман Чернов тата чӑлхапа трикотаж фабрикинчи Мария Матвеева бригадир ҫӗнсе илчӗҫ.

Шупашкарти Калинин районӗн команди халӗ январь вӗҫӗнче ГТО комплексӗн нумай енӗпе иртерекен Чӑваш АССР чемпионатне хутшӑнма хатӗрленет. Командӑра, тӗпрен илсен, пир-авӑр ӑстисем.

Г. ТРОФИМОВ.
СССР спорт мастерӗн кандидачӗ.

Хоккей хыпарӗсем

РСФСРта мала тухассишӗн Вӑтам Атӑл зонинче иртерекен хоккеистсен ӑмӑртӑвӗн черетлӗ турӗнче пирӗн республика командисем — «Волгӑпа» «Трактор» — пӗр-пӗринпе тӗл пулнӑ. Чапаев ячӗпе хисепленекен производство пӗрлешӗвӗн хоккеисчӗсем 8:3 шутпа ҫӗнтернӗ. «Волгӑн» тапӑнса выляканӗ Н. Елин ку матчра пилӗк шайба ҫапса кӗртме пултарнӑ.

Ҫитес турта «Волга» Пензӑра «Спартакпа», «Трактор» Серов хулинче «Металлургпа» тӗл пулаҫҫӗ.

• • •

Республика чемпионатӗнче иккӗмӗш ҫаврӑмри вӑйӑсем пуҫланнӑ. «Волга» Ҫӗмӗрлере «Звездӑна» икӗ хутчен ҫӗнтернӗ — 13:2 тата 6:3. «Прогресс» килте «Энергие» выляса янӑ — 1:8; 1:6; Ҫӗрпӳри «Пламя» «Рубина» парӑннӑ — 5:11, 7:8. Канашри «Локомотив», килте выляса, Ҫӗнӗ Шупашкарти «Соколпа» очкосене ҫурмалла пайланӑ — 7:8, 8:4. Халӗ турнир таблицинче «Волгӑпа» «Энергия» малта, вӗсен 28-шар очко.

• • •

Иккӗмӗш ушкӑнта вылякан командӑсем пӗрремӗш ҫаврӑмри вӑййисене вӗҫленӗ. Халӗ ку ушкӑнти турнир таблици ҫакӑн пек:

	В.	Ҫ.	Н.ҫ.	В.я.	Ш.	О.
Химик (Елчӗк)	5	5	0	0	41—13	10
Аниш (Октябрьски)	4	3	0	1	24—18	6
Автомобилист (Кӳкеҫ)	5	2	0	3	17—11	4
Факел (Сосновка)	3	2	0	1	14—10	4
Урожай (Тутаркасси)	4	1	0	3	19—17	2
Юнга (Муркаш)	5	0	0	5	10—56	0

А. ПАВЛОВ.

Ҫӗнтерӳпе таврӑннӑ

Йошкар-Олара юр ҫинче футболла выляса РСФСРта мала тухассишӗн ҫамрӑк спортсменсен турнирне ирттернӗ. Шупашкарти «Сталь» (тренерӗ В. Еремин) унта Ульяновскри «Волгӑна» — 5:2, Набережные Челны хулинчи «Торпедӑна» — 6:1, Муромри «Факела» — 9:2, Зеленодольскри «Прогреса» — 4:1, Нижнекамскри «Сменӑна» 2:1 шутпа парӑнтарнӑ, Йошкар-Олари «Дружба» командӑпа 1:1 шутпа вылянӑ. Пурӗ 11 очко пухса, «Сталь» пӗрремӗш вырӑн йышӑннӑ.

Шупашкарсен командинчи А. Столяров, 8 мечӗк тапса кӗртсе, чи лайӑх бомбардир ятне тивӗҫ пулнӑ.

П. КРЫСИН.

Редактор А. П. КАЗАНОВ.

ҪАНТАЛӐК

Синоптиксем пӗлтернӗ тӑрӑх, паян кӑнтӑрла пирӗн республикӑра пӗлӗтлӗ ҫанталӑк пулать, кӑштах йӗпе юр ҫӑвать. Ҫил кӑнтӑр-хӗвеланӑҫӗнчен ҫеккунтра 7—12 метр хӑвӑртлӑхпа вӗрет. Сывлӑш температури республикӑра 1 градус ӑшӑран пуҫласа 4 градуса ҫити сивӗ, Шупашкарта 0—2 градус сивӗ пулать.

Паян кун тӑршшӗ 8 сехет те 13 минут. Хӗвел 16 сехет те 49 минутра анать.

ТЕЛЕВИДЕНИ

ЭРНЕКУН.
ЯНВАРӖН 26-МӖШӖ
ПӖРРЕМӖШ ПРОГРАММА

6.30 — 120 минут.
8.35 — Мультфильмсем.
9.05 — «Дорога длиною в 150 лет». Садовскисен династийӗ ҫинчен.
10.15 — Ҫулталӑк вӑхӑчӗсем. Январь.
11.15 — 16 тултарманнисем тата асларахисем
12.00 — «Автопортрет с чужими глазами». Документлӑ фильм премьери.
12.30 — Вӑхӑт.
13.00 — Концерт.
15.15 — Австрали Союзӗн наци улӑвӗ — Австрали кунӗ тӗлне. «Суралнӑ кун ячӗпе, Австрали».
16.15 — Ачасене чӗрчунсем ҫинчен. Ленинградран.
16.45 — «Белый олень». Якут АССРӗнчи Амга поселокӗнчи ачасен «Амгинские березки» ансамблӗ лартнӑ юмах.
17.10 — Индин наци улӑвӗ тӗлне. Кинопрограмма.
18.10 — Л. Лавлинский поэзийӗ.
18.25 — Коллаж. (Реклама. Пӗлтерӳсем. Информаци).
18.30 — Вӑхӑт.
19.00 — Ҫул ҫинчи хӑрушсӑрлӑхшӑн.
19.30 — «Гром не грянет». Ҫитӗннисем валли мультфильм.
19.35 — «Руфь». Илемлӗ телефильм.
21.00 — Вӑхӑт.
21.30 — «Судьба одного изобретения». Телеочерк.
21.45 — «Это было... было...»
22.05 — «Взгляд».
23.50 — Ҫӗнӗ хыпарсен телевидени служби.
00.10 — «Валерий Леонтьев в Индии». Фильм-концерт премьери.

ИККӖМӖШ ПРОГРАММА

8.00 — Ирхи гимнастика.
8.15 — «Хочу все знать». Киножурнал.
8.35 — 10.55 — Вӗренӳ передачисем.
10.55 — «Час мужества». Наукӑллӑ - популярлӑ фильм.
11.05 — Килти академи.
11.55 — Иллюзион. «Потерявший память из Коленьо». Илемлӗ фильм (Итали).
13.35 — Документлӑ фильмсем.
14.15 — Иккӗмӗш хут кӑтартакан телефильм сеансӗ. «Хлеб — имя существительное». 4-мӗш сери.
17.00 — Мультфильмсем.
17.30 — И. Демьянов юрлать (Шуп.).
17.50 — Республика кунӗ (Шуп.).
18.00 — «Чӑваш эрешӗсем» (Шуп.).
18.30 — Вӑхӑт.
19.00 — «Квадратура круга». Нацисем хушшинчи хутшӑнусен ыйтӑвӗсемпе йӗркеленӗ программа.
20.00 — Ырӑ каҫ пултӑр, ачасем!
20.15 — «Квадратура круга». 2-мӗш пайӗ.
21.00 — «Кандидаты в роли менеджеров». КПСС Ленин райкомӗнче иртернӗ ӗслӗ вӑйӑ ҫинчен репортаж (Шуп.).
21.45 — «Зима в раю». Илемлӗ телефильм премьери.

ТЕАТР

К. В. ИВАНОВ ЯЧӖПЕ ХИСЕПЛЕНЕКЕН ЧӐВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ДРАМА ТЕАТРӖ — январӗн 26-мӗшӗнче «Саламби» пьеса, январӗн 27-мӗшӗнче «Вунсаккӑрта чух...» драма.

ЧӐВАШ ГОСУДАРСТВО МУЗЫКА ТЕАТРӖ — январӗн 26-мӗшӗнче «Жизель» балет, январӗн 28-мӗшӗнче 11 сехетре «Доктор Айболит» юмах-балет.

РЕСПУБЛИКӐРИ ВЫРӐС ДРАМА ТЕАТРӖ — январӗн 26-мӗшӗнче «Черная роза — эмблема печали, красная роза — эмблема любви...» крекклӗ хайлав, январӗн 27-мӗшӗнче «Женский стол в «Охотничьем зале» трагикомеди.

Спектакльсем 19 сехетре пуҫланаҫҫӗ.

КИНО

«СЕСПЕЛЬ» — Кӑвак зал: «Однажды в Америке» — 9.00, 15.00, 19.00; «Высокий блондин в черном ботинке» — 13.00. Кӗрен зал: «Ночные воришки» — 9.00, 10.50, 12.40, 14.30, 16.30, 18.30, 21.00. Кинозал: «Две стрелы» — 16.00, 18.00, 20.00.

«ОКТЯБРЬ» — «Чернобыль. Хроника трудных недель» х/д фильм — 9.00; «Однажды в Америке» — 10.15, 14.30, 18.40.

«ПОБЕДА» — Пысӑк зал: «Месть и закон» — 9.00, 11.30, 14.30, 17.30, 20.00. Вӑтам зал: «Путешествие пана Кляксы» — 10.00; «К сокровищам авиакатастрофы» — 12.00, 16.30, 18.30, 20.30. Пӗчӗк зал: «Один среди своих» — 9.00, 14.00, 16.00, 21.00; «Трагедия в стиле рок» — 11.00, 18.00.

МИР» — «Приключения бельчонка Мики» — 9.00, 10.30; «Лиловый шар» — 12.00, 14.00; «Конвой» — 16.30, 18.30; «Смиренное кладбище» — 20.30.

«СОКОЛ» — «Ежик и девочка» — 10.00; «Жинина династия» — 11.30, 16.00, 20.10; «Всех за решетку!» — 13.00, 17.30.

«ЛУЧ» — «В крайнем случае я тебе ничего не скажу» — 16.00, 18.00, 20.00.

«ЮНОСТЬ» — «Чук и Гек» — 13.30; «Месть и закон» — 15.00, 17.30, 20.00.

ПИРӖН АДРЕС:
428019, г. ЧЕБОКСАРЫ,
пр. ИВАНА ЯКОВЛЕВА, 13.
ДОМ ПЕЧАТИ, III ЭТАЖ.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор — 21-00-67; редактор заместителӗсем — 21-04-17 тата 21-20-07; ответлӑ секретарь — 21-13-26; секретариат — 25-13-01; парти пурнӑҫ пайӗ — 21-08-61 тата 25-13-24; идеологи пайӗ — 21-03-54 тата 25-13-18; промышленность, строительство тата транспорт пайӗ — 21-33-64, 25-13-04 тата 25-13-81; агропромышленность пайӗ — 21-08-62, 25-13-10, 25-13-05 тата 25-13-58; советсен ӗҫӗпе социаллӑ пурнӑҫ пайӗ — 21-03-04 тата 25-13-06; культура пайӗ — 21-08-56 тата 25-13-02; ҫырусемпе обществӑлла корреспондентсен пайӗ — 21-05-21, 25-13-07 тата 29-76-22; информаципе спорт пайӗ — 21-22-31 тата 25-13-09; фотокорреспондент — 21-45-94; хамӑр корреспондентсем — 3-24-91 (Канаш), 2-10-54 (Елчӗк), 4-34 (Етӗрне) тата 2-26-30 (Сӗнтӗрвӑрри); издательство директорӗ — 21-00-23; пӗлтерӳсен пайӗ — 21-14-89 тата 29-76-39; «Вестник недели» редакцийӗ — 21-04-39; бухгалтери — 21-45-86; Чӑваш АССР Журналистсен союзӗн правленийӗ — 25-13-83; хаҫатӑн обществӑлла приемнӑйӗ — 21-22-94.

Хаҫат тунтикунсӑр пусне куллен тухать.

НТ 31343. Индекс газеты — 54800. Типография издательства Чувашского обкома КПСС, г. Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13. Высокая печать, объем 2 печ. листа. Тираж 72.000 экз. Заказ № 432.